24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ЯНВАРЬ 21 ЮНКУН 17 (6042) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔ ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

## ПИРЕ АСЛĂ ЛЕНИНĂН ÇĔНТЕРӲЛЛĔ ЯЛАВĔ ÇУЛ КĂТАРТСА ПЫРАТЬ

Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсем хамăрăн тăван çĕршыв çине ултавлăн килсе тапăннă гитлерла вăрă-хурахсен бандисене хирĕç отечественнăй аслă вăрçа çĕкленчĕç. Вĕсем Совет çĕршывĕн кашни пусăмĕшĕн, кашни хулашăн, кашни ялшăн мухтавлăн та паттăррăн кĕрешеççĕ. Пайтах кĕрешӳсем витĕр тухса хурçă пек çирĕпленнĕ Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çапса аркатассишĕн, тăван халăхăн пурнăçĕпе ирĕкне сыхлассишĕн арăслан пек çапăçать. Çак хаяр та татăклă çапăçу кунĕсенче кашни гражданин, кашни совет воинĕ умĕнче — вилĕмсĕр Ленинăн образĕ. Пирĕн умра вăл образ нимĕнле тăшман парăнтарайми çĕнтерӳ ялавĕ пек çиçсе тăрать.

В. И. Ленин вилнĕренпе 18 çул тултарчĕ. Вăл хăйĕн пурнăçне ĕçхалăх телейĕшĕн пурăнса ирттернĕ. Унăн пурнăçĕ — татти-сыпписĕр кĕрешӳ, унăн хаваtлă ячĕ — çĕнтерӳ.

Урса кайнă фашистсен кĕтĕвĕсем аслă Ленин хăйĕн пурнăçĕпе кунçулне парсе туса хунă социализмлă государствăн никĕсĕсене аркатса тăкасшăн, ăна юн ăшне путарса хурасшăн. Вĕсем хăйсен умне «аслă вырăс нацине, Плехановпа Ленин, Белинскипе Чернышевский, Пушкинпа Толстой, Глинкăпа Чайковский, Горькипе Чехов, Сеченовпа Павлов, Репинпа Суриков, Суворовпа Кутузов нацине» пĕтерсе хурас задача лартаççĕ.

Ирĕке юратакан халăхсене чура тăвас шутпа пирĕн тăван çĕршывăмăр çине ирсĕр тăшмансем пĕрре çеç мар тапăнса кĕме хăтланнă. Анчах та аслă вырăс халăхĕ, хăйĕн паттăрлăхĕпе хастарлăхне пула, кашни хутрах тăшмана тăван çĕршыв территорийĕнчен тасата çитиех хăвалаcа янă.

Граждăн вăрçин чи йывăр, чи ответлă тапхăрĕсенче оборона ĕçне пĕтĕмĕшпех Ленин хăй аллине илсе ертсе пынă. Вăл яланах халăх вăйне ĕненсе тăнă, пĕтĕм халăха хавхалантарса пынă, тăшмана çĕнтермешкĕн мĕн тумаллине вĕрентнĕ. Вăл çапла каланă: «Вăрçа чăнласах туса пырас тесен, лайăх организациленсе тăракан тыл кирлĕ. Чи лайăх çарсене те, революци ĕçне чун-чĕререн парăнса тусă пыракан çынсене те, вĕсен кирлĕ таран хĕçпăшал, продовольстви, вăрçă ĕçне пелми çук пулсан, тăшман çийĕнчех аркатса тăкать», тенĕ.

Ленин юлташăн çак кăтартуне асра тытса, пирĕн парти хамăрăн Хĕрлĕ Çара кунран кунах хĕçпăшаллантарса, резервсем хатĕрлесе, тыла çирĕплетсе пычĕ. Халĕ эпир хăюллăнах çапла калама пултаратпăр: пирĕн тыл нихăçан та халăхи пек çирĕп пулман. Çакă ĕнтĕ — гитлерла вăрă-хурахсен бандисене петĕмĕшпех аркатса тăкма пире май паракан сăлтавсенчен пĕри.

Ленин юлташ пире çапла хушса хăварнă: «Тăшман пирĕн çине сĕмсĕррĕн тапăнса кĕрет пулсан, пирĕн вĕсене ĕмĕрлĕхех ăс кĕртмелле. Вĕсем малашне хăйсен ачисене те, ачисен ачисене те урăх ун пек хăтланма ан хушчăр», тенĕ.

Пирĕн совет воинĕсем, Ленин юлташăн çак сăмахĕсене чĕрере тытса, юнлă гитлеровецсене хирĕç хăюллăн та паттăррăн кĕрешеççĕ. Çак кĕрешӳре вĕсене В. И. Ленин образĕ ихсĕлми вăй-хăват, никам çĕнтерейми паттăрлăх парса пырать. Ленин—Сталин ялавĕ айĕнче кĕрешсе вĕсем çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ тăваççĕ. Хĕрлĕ Çарăн мухтавĕпе чапне пĕтĕм тĕнчене кăтартса тĕлĕнтереççĕ.

Халĕ пирĕн Хĕрлĕ Çар чаçĕсем вăйлăн пыра-пыра çапиппе нимĕç вăрă-хурахĕсен пыйтлă та çĕтĕк-çатăк шăйкисем, хăйсен хура юнĕпе чыхăна-чыхăна кайса, каялла чакса пыраççĕ. Фронтăн нумай участокĕсенче вĕсем, хăйсен тирĕсене çăлса хăварас тесе, çар хатĕрĕсемпе техникине пăрахса хăварсах тараççĕ. Ку вăл — юнпăн çунакан тискер кайăк вилмеллех аманнине çирĕплетсе парать. Анчах та çакна мамас пулмасть: аманнă тискер кайăк, чунĕ тухас умĕн, темиçе хут ытларах хаярланать. Нимĕç çарĕ пайтах юн юхтарса халран кайнă пулин те, унăн вăйĕ пĕтсе çитмен-ха. Вăл пире хирĕç татах та ытларах урса кайса çапăçĕ. Çавăнпа та пирĕн, тăшман вăйĕ пĕтсе çитрĕ тесе, пĕр самантлăха та лăпланса лармалла мар. В. И. Ленин пире яланах хамăра хамăр лăпланса ларассинчен сыхланма хушнă. Вăл çапла каланă: «Вăрçăра чи пысăк хăрушлăх — вăл тăшман вăйне хакласа çитерейменсĕр, эпир тăшманран вăйларах-ха, тесе лăпланса ларни. Çакă вăл поражени патне илсе пыма пултаракан хăрушăран та хăрушă япала», тенĕ.

Ленин пĕтĕм ĕçхалăхне çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерӳсем патне ертсе пынă. Вăл — пĕтĕм ĕçхалăхĕн çулпуçĕ, чи сывăх тусĕ, вĕрентекенĕ. Ленин — коммунистсен партин организаторĕ. Совет государствине туса хуракан. Ленин — чи пысăк теоретик. Ленин марксизм вĕрентĕвне малалла аталантарнă, социализмлă революци теорине тунă.

Ленин — пусмăрпа чуралăха хирĕç кĕрешекен пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхĕн аслă полководецĕ. Анчах та вăл ахаль йышши полководец мар, пĕтĕм халăха татăклă çĕнтерӳсем патне ертсе каякан полководец.

Ленинăн чи сывăх тусĕ, унăн чи шанчăклă юлташĕ — И. В. Сталин. Ленин вĕрентĕвĕсене Сталин юлташ малалла аталантарса пурнăçа кĕртсе пырать.

Ленин паян пирĕн хушăмăрта çук.

Анчах та вăл — кашнин чĕринче пурăнать. Ленин пĕтĕм совет халăхĕн геройлă ĕçĕсенче, фронтра тата тылра пулакан кашни паттăр та мухтавлă ĕçре пурăнать. Ленин — пирĕн Сталин юлташăн хурçă пек çирĕп чĕринче, унăн ихсĕлми вăйĕнче пурăнать.

Ленина халăхран уйăрма çук, çавнашкалах Сталина та Ленинран уйăрма çук.

Сталин — вăл паянхи Ленин.

Ленин — Сталин вĕрентĕвĕ малта пыракан этемлĕхĕн чи прогрессивлă шухăшĕсене пĕтĕçтерсе тăрать; вăл вĕрентӳ — пĕтĕм тĕнчери этемлĕх культурин чи çӳлĕ пусăмĕ. Ленинизм — пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен телейĕшĕн кĕрешмелли çивĕч хĕçпăшал.

Совет халăхĕ нимĕç оккупанчĕсене хирĕç тĕреслĕхлĕ вăрçă вăрçать. Çак вăрçăра пире Ленин—Сталин вĕрентĕвĕ вăй-хăлпа шанчăк парса пырать. «Гитлерла çĕлен-калтасене пĕр çын юлмиччен вĕлерсе пĕтерĕр!» — çакăн пек пирĕн паянхи лозунг. «Фашистла Германин çар машинине тĕпĕ-йĕрĕпе çĕмĕрсе тăкса, фашизм пусмăрĕ айĕнчи халăхсене пурне те ирĕке кăларăр!» — çакăн пек пирĕн историллĕ мисси.

Ку миссие эпир пурнăçа кĕртетпĕр.

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар тăшмана сывлăш çавăрма памасăр хăватлăн пыра-пыра çапса халран ярать. Темиçе миллион нимĕç салтакĕсем хăйсем туçа пулма шутланă вырăс çĕрĕнче вилĕм тупрĕç. Анчах та тăшмана эпир пĕтĕмĕшпех çапса ватайман-ха. Малта татах йывăр та хаяр кĕрешӳсем тăраççĕ. Пирĕн задача — предприятисенче, колхозсенче, учреждениссенче татах та ытларах тимлесе ĕçлесен, фронта ытларах та ытларах хĕçпăшал, боеприпассем, продуктсем, резервсем хатĕрлесе парасси.

Хамăр тăван çĕршыва ирсĕр урнисемпе таптаса вараланăшăн, совет хулисемпе ялĕсене çаратса, çунтарса, аркатса пĕтернĕшĕн, вырăс нацийĕн мухтавĕпе чапĕнчен мăшкăлланăшăн, мирлĕ пурнăçпа пуранакан граждансен юнне юхтарнăшăн тăшмана нихăçан та каçару пулас çук. Юншăн — юн, вилĕмшĕн — вилĕм, мĕнпур вăрă-хурахла тискерлĕхшĕн — хаяр тавăру! Çакă вăл — пĕтĕм совет халăхĕн приговорĕ.

Ленин — Сталин ялавĕ айĕнче кĕрешсе, гитлеризма тĕппипех аркатса тăкассишĕн, малалла!

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### Январĕн 19-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 19-мĕшĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен войскисене хĕвеланăç еннелле хăвалаcа пынă. Противник пысăк çухатусем тӳсет, уйрăмăнах унăн çынсем тĕлĕшпе çухату пысăк. Пирĕн чаçсем татах малалла кайнă, халăх пурăнакан темиçе пункта, вăл шутра Верея (Мускав облаçĕ) тата Кондрово (Смоленск облаçĕ) хулисене йышăнса илнĕ.

Январĕн 18-мĕшĕнче нимĕçсен 15 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 6 самолет пĕтнĕ.

Январĕн 19-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 2 самолетне персе антарнă.

* * *

Январĕн 18-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 8 танкне, пехотăпа грузсем турттарса пыракан 530 автомашинине ытла, боеприпассем тиенĕ 335 лавне, 35 орудине прислугисемпе пĕрлех, зенитнăй пулеметсен 13 точкине пĕтерсе тăкнă, чугунçул çинчи 3 эшелонне вут тивертсе çунтарса янă, боеприпассен складне тата горючи складне взрыв туса сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотин 5 батальонне сапаласа янă, пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Александров юлташăн боецĕсем (Хĕвеланăç фрончĕ) пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан 4 пункта нимĕçсенчен ирĕке кăларнă тата 3 оруди, 8 миномет, 4 автомашина, 110 винтовка тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 150 çын вилсе пĕтнĕ. Тепĕр участокра Селезнев юлташăн чаçĕ, малалла наступлени туса пырса, нимĕçсен 5 танкне, 14 автомашинине, 200 снарядне, 1.600 гранатине тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхне тытса илнĕ.

* * *

Медынь хулине йышăнса илнĕ чухне пирĕн боецсем нимĕçсен пĕр самолетне, 6 танкне, 514 автомашинине, 26 орудине, 34 пулеметне тата боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Тăшманăн танкĕ, пирĕн наступлени туса пыракан часть çине персе тăрса, пирĕн боецсене малалла кайма чăрмантарнă. Фролов красноармеец систермесĕр танк патне шуса пынă та, машинăн люкне гранатăсен çыххине пăрахса, танкăн пĕтĕм экипажне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Косимово ялĕшĕн пынă çапăçура Кротов старшина, боецсен группипе пĕрле, тăшманăн туппине тытса илнĕ те, ăна тăшман еннелле çавăрса лартса, тӳррĕн тĕллесе персе нимĕçсен танкне çĕмĕрнĕ.

* * *

К. юлташ ертсе пыракан отрядри партизансем, Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскерсем, И. ялĕнче нимĕçсен маскировка туса лартнă 11 танкĕ пуррине пĕлнĕ. Партизансем çакăн çинчен пирĕн пĕр чаçăн командирне пĕлтернĕ. Противникăн танкĕсем ăçта вырнаçса тăни çинчен тĕрĕс сведенисем илнĕ хыççăн совет артиллерисчĕсем нимĕçсен танкĕсене пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 43-мĕш пехотнăй полкĕн 10-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Отто Шульц çапла каласа панă: «Юлашки 10 кун хушшинче пирĕн рота хăйĕн йышĕн виççĕмĕш пайне çухатрĕ. Нумай салтаксем эпир çĕнтерессине ĕненми пулчĕç ĕнтĕ. Пирĕн ротăри Валц, Вец, Риль ефрейторсем тата ытти салтаксем мана Германия çак вăрçăра пусĕпех поражени тӳсет тесе каларĕç. Эпĕ те çавăн пекех шухăшлама пуçларăм. Полкра дисциплина пите хытă хавшанă. Нумаях пулмасть Энгербайн салтака наблюдательнăй пункта янă. Вăл унта темиçе минута хушши тăнă та каялла блиндажа чупса килнĕ. Вырăссем атакăна кайсан, Мюллер салтак землянкăран тухман. Мейер салтак хăйĕн килне çапла çырнăччĕ: питех те сахал çăкăрпа тата кофе ятлă пăтранчăкпа пурăнма ытла та йывăр. Пирĕн çырусене малтан рота командирĕ вулать. Çав çырăва тытса чарнă пулнă. Майера çавăншăн 10 талăклăха арестлерĕç».

Вилнĕ ефрейтор Вилли Изельбам çумĕнче тупнă çырура çапла çырнă: «Лазаретран тухнă хыççăн эпĕ каллех шанса пăсалтăм. Никам та мана пулăшма пултараймасть, пулăшасшăн та мар. Салтаксене нумайĕшĕсенне урисене тăм илсе янă та вĕсем çакна пула вилнĕ. Çак сивĕсене тӳссе ирттерме пурнчен ытла аманнисене кансĕр. Вĕсенчен нумайĕшĕсем мĕнле те пулсан хăтăлса тухĕччĕç те, анчах шартлама сивĕсем пирки вилеççĕ. Эпĕ çапла çеç калама пултаратăп: кам кунтан чĕррĕн хăтăлса тухать, вăл киле ĕмĕрлĕхе сывмар е чăлах пулса таврăнать. Кунта урăх юлма май çук, анчах та кам та пулсан Российăран киле таврăнайĕ-ши?»

* * *

Калинин облаçĕнчи Жуково ялĕнчен каялла чакнă чухне гитлеровецсем пĕр çурта хĕрарăмсемпе ачасен пысăк ушкăнне хăвалаcа кĕртнĕ те çуртне питĕрсе лартнă, унтан ăна вут тивертсе çунтарса янă. Хĕрарăмсемпе ачасем пурте çунса кайнă.

* * *

Меддлбург (Голландия) сывăхĕнче нимĕçсен боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. Нимĕçсен склада сыхласа тăракан салтакĕсенчен 13-шĕ вилнĕ.

* * *

Петровац патĕнче Югослави партизанĕсем Итали çар чаçне хирĕç виçĕ кун хушши çапăçнă. Итальянецсем каялла чакнă, вĕсен 114 салтакĕ вилсе юлнă.

### Январĕн 20-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 20-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлă çапăçусем туса пынă.

* * *

Юлашки икĕ кун хушшинче Власов юлташăн боецĕсем (Хĕвеланăç фрончĕ) тăшманăнне 27 оруди, вăл шутра ин-çете перекен 6 оруди, 44 пулемет, 243 автомашина, 7 тягач, 3 радиостанци тытса илнĕ. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 600 çын вилсе пĕтнĕ. Тепĕр участокра Белов юлташăн кавалерисчĕсем противник çине кĕтмен çĕртен пырса тапăнса, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен Лысенко юлташăн чаçĕнчи боецсем, тăшмана хирĕç виçĕ сехет хушши çапăçса, А. ялне йышăннă, нимĕçсенне 3 танк, 6 оруди, 5 автомашина, 40.000 патрон тата ытти нумай тĕрлĕ çар пурлăхĕ тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсен 200 вилли вырта юлнă.

* * *

Кĕçĕн лейтенант Тепляков батарейĕнчи артиллеристсем, хăйсен орудийĕсене лайăх маскировка туса лартса, тăшманăн 4 танкне сывăха янă та танксене тӳррĕн тĕллесе пере-пере пăрахнă. Çав çапăçурах Тепляков юлташăн батарейи тăшман миномечĕсен батарейине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Орел партизанĕсен пĕрлешнĕ отрячĕсем Брянск вăрманĕнче нимĕçсен пысăк карательнăй отрядне çавăрса илнĕ. Çав отряда нимĕçсем партизансене тытма янă пулнă. Çакăнта пулса иртнĕ çапăçура нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна вĕлернĕ. Партизансен аллине пысăк трофейăсем лекнĕ.

* * *

Нимĕçсен 32-мĕш пехотнăй полкĕн иккĕмĕш ротинчи ефрейтор Рудольф Тунн, Севастополь патне пымалла вырăнсенче вилнĕскер, çумĕнче дневник тупнă. Çав дневникран уйрăм вырăнсене кĕскен илсе пичетлетпĕр:

«Декабрĕн 13-мĕш. Фронт патнелле Севастополе штурмлама куçса пыратпăр.

Декабрĕн 17-мĕш. Вырăссем нихăçанхи пек те мар вăйлăн переççĕ, пульăсем шăпах эпир вырнаçнă тĕле лекеççĕ.

Декабрĕн 18-мĕш. Кран, Герман, Гейц, Маттельде—вилчĕç. Паян пирĕн вилнисем питех те нумай тата аманнисем 30 процента яхăн пулчĕç.

Декабрĕн 20-мĕш. Юлашкинчен çапах та эпир окопсем чавса выртрăмăр. Çĕрпе кун çапăçурах иртсе кайрĕç. Вĕçĕмсĕр пăшалсемпе миномĕтсенчен тата артиллерирен пенĕ сасă кĕрлесе тăрать. Ухмаха ерме те пулать... Эдгард, çавăн пекех Дональд Рейф та, аманнă. Мана отделени командирĕ турĕç, анчах манăн 5 салтак кăна. Мĕнпур взводра та 12 çын çеç шутланать. Нервсем тӳсеймеççĕ.

Декабрĕн 21-мĕш. Малалла куçаймарăмăр. Виçĕ талăк хушши пĕр сывăрмасăр, пĕр канăçсăр иртрĕ, çакăнтан ăнăхрахчи тата мĕн пулма пултарĕ-ши?

Декабрĕн 22-мĕш. Çаплах çакăнта выртатпăр-ха. Ку йывăр положенирен пире кам çăлса кăларĕ-ши? Вырăссем пире çĕр çинчен пусĕпех шăлса пăрахаççĕ. Пирĕн ротăра 42 çын тăрса юлчĕ. Çакăн пирки ухмаха ерме те пулать».

* * *

Нимĕçсен вилнĕ салтакĕ Герберт Фридман çумĕнче ун патне Дрейзденран куккăшĕ янă çырăва тупнă. Унта çапла каланă: «Эсĕ çав çапăçăва лекни питех те шел. Анчах пирĕншĕн те кунта ырри сахал. Çăн пата мĕн те пулин питех те ярса парас килетчĕ. Часах хамăр та ахă эпир выçса вилетпĕр».

* * *

Ленинград облаçĕнчи Тосненски районри Кривино ялĕнче гитлерла бандитсем шкул директорне Воробьева тата Лесопункт заведующине Матвеева чĕрĕллех çĕр айне чавса пытарнă. Çакăн умĕн нимĕçсем хăйсен жертвисенчен нумай вăхăт хушши тискеррĕн мăшкăлланă — вĕсене прикладсемпе хĕненĕ, çĕçĕсемпе чикнĕ, аллинчи пӳрнисене каса-каса татнă.

## В. И. ЛЕНИНА АСĂНСА

КУСЛАВККА. Январĕн 20-мĕш (Телефонпа). Аслă теоретик, большевиксен аслă партине организациленĕ Ленин вăхăтсăр вилни 18 çул тултарчĕ. Анчах Ленин пирĕнпе, унăн аслă ĕçĕ ĕмĕрех ĕççыннисемпе пĕрле. Ленин — пирĕн кашни çитĕнӳре, эпир тунă кашни çĕнтерӳре пурăнать.

Ленин кунĕсене хатĕрленсе, ВКП(б) райкомĕн районри агитпунктĕнче Ленин пурнăçĕпе ĕçне кăтартакан фотовыставка тата вăл çырнă кĕнекесемпе статьясен выставкине организациленĕ. Агитколлектив руководителĕсемпе инструкциллĕ доклад туса ирттернĕ.

Ленин кунĕсенче кашни колхозра, учрежденире тата предприятисенче Ленина асăнса пухусем пулса иртеççĕ. Районри йывăç каскалакан комбинатра январĕн 21-мĕшĕнче Ленина асăнса пуху пулса иртет. Пухура комбинатри стахановецсемпе ударниксем хăйсен ĕçри çĕнтерĕвĕсене кăтартса параççĕ. Халĕ комбинат цехĕсенче калаçусем пулса иртеççĕ. Ленин кунĕсене районри ĕççыннисем ĕçри пысăк çитĕнӳсемпе паллă тăваççĕ.

**Н. ЛЬВОВ.**

* * *

КӲКЕÇ. Ленин кунĕсене хатĕрленсе, январĕн 17-мĕшĕнче районри агитпунктра ВКП(б) райкомĕ агитколлективсен руководителĕсем валли «18 çул Ленинсăр, Ленин çулĕпе» темăпа инструкциллĕ доклад туса ирттернĕ. Ленин кунĕсенче кашни колхозрах тата район центрĕнче хурлăхлă ларусем пулса иртеççĕ.

**Т. ЛОГИНОВ.**

* * *

КАНАШ (Хамăр корр.). Пĕтĕм тĕнчери пролетарисен çулпуçĕ В. И. Ленин вилнĕренпе 18 çул тултарать. Пирĕн аслă çĕршыври ĕççыннисем Ленин ятне хăйсен чĕринче ĕмĕр манми сыхласа усраççĕ.

Январĕн 21—22-мĕшĕсенче Канашри предприятисенче, шкулсемпе учрежденисенче Ленина асăнса ларусемпе пухусем пулса иртеççĕ.

«18 çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе» темăпа хулара 43 агитатор, ВРЗ-ра 20 агитатор, чугунçул çинче 8 агитатор докладсем туса параççĕ.

Ленин кунĕсене ялсенче те аллăн паллă тăваççĕ. Аслă çулпуçăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа пама парти райкомĕн работникĕсем ялсене тухса кайнă тата çак ĕçе вырăнти интеллигенцие те явăçтарнă.

Районри парткабинетра Ленин пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартакан выставка организациленĕ.

## Государство заемĕсен 1942 çулта пулмалли вылявĕсем

СССР Финанс Халăх Комиссариачĕ 1942 çулта государство заемĕсен вылявĕсем пулмалли срокĕсене çирĕплетнĕ.

Иккĕмĕш пятилетка заемĕн (4-мĕш çулхи кăларăм) тата ССР Союзĕн оборонине тĕреклетмелли заемăн январь уйăхĕнче пулса иртекен вылявĕсем хыççăн çав икĕ заемăн çитес вылявĕсем çак вăхăтсенче пулмалла: апрелĕн 15-мĕшĕнче, июлĕн 15-мĕшĕнче тата октябрĕн 15-мĕшĕнче.

Виççĕмĕш пятилетка заемĕн (1-мĕш çулхи кăларăм) 13-мĕш вылявĕ тата Виççĕмĕш пятилетка заемĕн (2-мĕш çулхи кăларăмĕн) 9-мĕш вылявĕ февралĕн 20-мĕшĕнче пулмалла. Ку заемсен малалли вылявĕсем çак вăхăтсенче пулмалла: майăн 20-мĕшĕнче, августăн 20-мĕшĕнче тата ноябрĕн 20-мĕшĕнче.

Виççĕмĕш пятилетка заемĕн (3-мĕш çулхи кăларăм) вылявĕсем кăçалхи çул тăватă пулаççĕ: мартăн 5-мĕшĕнче, июнĕн 5-мĕшĕнче, сентябрĕн 5-мĕшĕнче тата декабрĕн 7-мĕшĕнче.

1938 çулта кăларнă выигрышлă шалти заемăн улттă выляв пулать: февралĕн 10-мĕшĕнче, апрелĕн 10-мĕшĕнче, июнĕн 10-мĕшĕнче, августăн 10-мĕшĕнче, октябрĕн 10-мĕшĕнче тата декабрĕн 10-мĕшĕнче.

Виççĕмĕш пятилетка заемĕн (4-мĕш çулхи кăларăм) пирваихи вылявĕ — июнĕн 25-мĕшĕнче, иккĕмĕш вылявĕ — сентябрĕн 25-мĕшĕнче, виççĕмĕш — ноябрĕн 25-мĕшĕнче тата тăваттăмĕш — декабрĕн 25-мĕшĕнче пулмалла.

1942 çулта выигрышлă вылявсем мĕнпурĕ 30 выляв пулса иртмелле. (ТАСС).

## Трактористсен курсĕ уçăлчĕ

ШĂХАСАН. Машинно-тракторнăй станци çумĕнче юлашки кунсенче трактористсен курсĕ уçăлчĕ. Курсра пĕтĕмпе 50 çын вĕренет, вĕсенчен нумайĕшĕсем хĕрарăмсем.

Курсра тракторпа ĕçлеме вĕреннипе пĕрлех большевиксен партийĕн историне вĕренеççĕ. Ирхине, занятисем пуçланиччен, хаçатсем тăрăх кĕске политинформаци туса ирттереççĕ.

**С. ХРОМОВ.**

*Ем. ЯРОСЛАВСКИЙ*

# Ленинпа Сталин—совет халăхĕн çĕнтерĕвĕсен организаторĕсем

Рабочи класăн аслă çулпуçĕ В. И. Ленин вилни çинчен калакан хыпар пĕтĕм тĕнчене саралнă кунранпа 18 çул иртрĕ. 1924 çулти январĕн 21-мĕшĕнче аслă революционерăн, вăйлă теоретикăн, массăсен генилле организаторĕн, пирĕн Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) мухтавлă партине тăваканăн, тĕнчери пĕрремĕш Советлă Социализмлă государствăна туса хураканăн, пĕтĕм ĕççыннисен учителĕпе тусĕн пысăк чĕри ĕмĕрлĕхех тапма чарăнчĕ.

Сталин юлташăн пурнăçĕ, унăн идейисемпе ĕçĕсем В. И. Ленинăн пурнăçĕпе, идейисемпе тата ĕçĕсемпе таччăн çыхăнса тăраççĕ. XIX-мĕш ĕмĕр вĕçĕнчи тата XX-мĕш ĕмĕрĕн малтанхи çулĕсенчи пирĕн пĕтĕм тапхăрта Ленинпа Сталин тарăн паллă хăварчĕç. Вĕсем коммунизмăн никĕсне хуракансен Маркспа Энгельсăн ĕçне генилле малалла туса пыракансем пулчĕç, вĕсем Маркспа Энгельсăн вĕрентĕвне çĕнĕ условисенче, империализмлă вăрçăсемпе социализмлă революцисен тапхăрĕнче аталантарса, марксизм-ленинизм вĕрентĕвне туса хучĕç. Вĕсем 1917 çулти октябрь уйăхĕнче çĕнтерӳллĕ социализмлă пĕрремĕш революцие ертсе пычĕç, çак революци этемлĕх историйĕнче çĕнĕ тапхăра, социализм тапхăрне пуçласа ячĕ. Ленинпа Сталин граждан вăрçипе интервенци çулĕсенче социализмлă çамрăк государствăна геройла хӳтĕлесе хăварас ĕçе организацилерĕç. Вĕсем Хĕрлĕ Çара туса йĕркелерĕç, вĕсем массăсене отечественнăй аслă вăрçа туса пыма мобилизацилерĕç, совет халăхĕ белогвардеецсен тата интервентсен кĕтӳвĕсене çĕнтерес ĕçе организацилерĕç. Ленинпа Сталин пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисене çĕнĕ çул кăтартса пачĕç. Вĕсем ертсе пынипе совет халăхĕ, питех те пысăк йывăрлăхсене—чухăнлăха, выçлăха, юхăнчăклăха — çĕнтерсе пырса, империализмлă вăрçă тата граждан вăрçи вăхăтĕнче арканнă хуçалăха ура çине тăратрĕ. Вĕсем ертсе пынипе Советсен çĕршывĕ халăх хуçалăхне социализмла реконструкцилемелли пĕрремĕш генеральнăй плана, электрификаци ленинла планне пурнăçа кĕртсе пыма тытăнчĕ. Ленин çакăн пек задача лартнă: «Коммунизм вăл—Совет влаçĕ тата пĕтĕм çĕршыва электрификацилени пулса тăрать». Ленин социализмлă строительствăн пĕрремĕш программине туса панă.

В. И. Ленинăн идея тĕлĕшĕнчи наследстви калама çук пысăк. Ленинпа Сталин миллионшар çынсене революцилле теорипе хĕçпăшаллантарчĕç, çапла вара историллĕ событисене ăнланмалла, общество аталанăвĕн законĕсене ăнланмалли майсене уçса пачĕç. Империализмлă эпохăн çĕнĕ условийĕсенче Ленин пролетариллĕ социализмлă революцин çĕнĕ теорине туса хатĕрлерĕ, çав революцие пролетариат, хăй гегемон пулса, пролетарилле мар массăсемпе—нумай миллионлă ĕççыннисен тата эксплоатацилекенсен массисемпе, пуринчен ытла хресченсемпе, союз тытса туса пырать. Ленин буржуаллă-демократиллĕ революци социализмлă революцине ӳссе куçасси çинчен калакан вĕрентĕве туса хатĕрленĕ. Вăл рабочи класс хресченсемпе союз тытса пырса пурнăçа кĕртекен пролетариат диктатури çинчен çĕнĕ вĕрентӳ туса хатĕрленĕ. Вăл çакна кăтартса панă: Советсем вĕсем—Российăри пролетариат пырса тупнă государство влаçĕн çĕнĕ форми пулса тăраççĕ. Ленин наци ыйтăвне çĕнĕлле аталантарса пынă, халăхсен туслăхĕн никам çĕмĕреймми никĕсне туса хăварнă. Ленин социализм пĕр çĕршывра çĕнтересси пирки çĕнĕ теори туса аталантарнă.

Çĕнĕ типлă рабочи партие—большевиксен партине—туса хурса, Ленин пире парти çинчен, рабочи класăн чи малта пыракан, ăнлакуллă, организациллĕ отрячĕ çинчен, рабочи класс организацийĕн чи аслă форми çинчен, пролетариат диктатурин чи хăватлă орудийĕ çинчен калакан çирĕп вĕрентӳ туса панă. Çак вĕрентĕве пула большевиксен партийĕ хăватлă вăй пулса тăчĕ.

Совет халăхĕ 18 çул хушши Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе пурăнать тата социализмшăн кĕрешет. Çак çулсенче Советсен çĕршывĕ тĕлĕнмелле вăйлăн улшăнчĕ. Сталин юлташ ССР Союзĕнчи Советсен иккĕмĕш съездĕнче аслăн тупа тунине эпир пурнăçа кĕртрĕмĕр.

Ленин пире парти членĕн хисеплĕ ятне тасалăхра тытса усрама хушса хăварнă, вара эпир çав хисеплĕ ята яланах тасалăхра тытрăмăр, эпир большевиксен партин тасалăхĕшĕн, большевиксен идейăпа мораль тĕлĕшĕнчи ĕçне çӳлте тытассишĕн, вĕсем малти ретсенче пымалла тăвассишĕн тăрăшрăмăр. Коммунистсем массăсене ертсе пыраканĕсен ятне илме тивĕçлĕ пулчăр, вĕсем çарти тата ĕçри дисциплинăн примерне, тăшмана хирĕç кĕрешнĕ чухне хăюллă та çирĕп пулнин, коммунизм ĕçне парăнса тăнин примерне кăтартчăр, —çакăн пек пулма хушнă эпир тата çавăн пек пулма хушатпăр та. Коммунизм ĕçне парăнса ĕçлессин, чăтăмлă, дисциплинăллă пулассин, идейăпа мораль тĕлĕшĕнчен çӳлти вырăнта пулассин чи лайăх тĕслĕхĕсене пире яланах Ленинпа Сталин кăтартса тăнă.

Ленин пире хамăрăн партин пĕрлĕхне куç шăрçине сыхланă пек сыхласа усрама хушса хăварнă, эпир вара çав пĕрлĕхе сыхласа хăвартăмăр. Эпир раскольниксене, дезорганизаторсене, оппортунистсене хирĕç пĕр килĕшмесĕр çирĕппĕн кĕрешсе пытăмăр, эпир вĕсене парти речĕсенчен хăваласа кăлартăмăр. Ленинпа Сталин пире революциллĕ сыхăлăхлă пулма тата тăшмансене пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пыма вĕрентрĕç, эпир çав тăшмансене хамăр ретсенчен кăкласа кăлартăмăр. Троцкистла-рыковла-бухаринла-зиновьевла, буржуалла-националистла т. ытти тĕрлĕ сутăнчăксене, пирĕн рете дезорганизацилес тесе, пирĕн партие вăйсăрлатса аркатса ярас тесе пирĕн ретсене кĕрсе кайнăскерсене, пĕтерсе тăкрăмăр, çавна пула вара чи пысăк хăрушлăх вăхăтĕнче, Советсен çĕршывĕ çине гитлерла Германия тапăннă вăхăтра большевиксен партийĕ вăрçă хăрушлăхне пĕрлĕхлĕ, нихăçанхи пек мар вăйлă тата авторитетлă пулса кĕтсе илчĕ. Отечественнăй вăрçăн фрончĕсенче хальхи питех те йывăр испытанисен кунĕсенче çапăçăва кĕрсе, пирĕн чи лайăх çынсем Ленин—Сталин парти ретне кĕреççĕ, çакăнпа вĕсем çур ĕмĕре яхăнах тĕреслешнĕ большевиксен партине тарăнăн хисеплешнине кăтартса пăраççĕ.

Эпир Сталин юлташ аслăн тупа тунине пурнăçа кĕртрĕмĕр, эпир рабочи класăн диктатурине сыхласа хăварса тĕреклетрĕмĕр, рабочи класпа хресченсен союзне сыхласа хăварса тĕреклетрĕмĕр, эпир пирĕн çĕршыври халăхсен ирĕклĕ союзне, ССР Союзĕнчи халăхсен тăванла туслăхне сыхласа хăвартăмăр тата ăна анлăлатса тĕреклетсе пытăмăр, çакна тăвас тесе эпир хамăрăн вăйсене шеллемерĕмĕр.

Владимир Ильич вилнĕ кунранпа иртнĕ 18 çул хушшинче пирĕн çĕршывра пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Сталинла виçĕ пятилетка çĕршывăн сăнпитне тĕпренех улăштарчĕç. ССР Союзĕ—малта пыракан социализмлă хăватлă индустрин, малта пыракан коллективлă социализмлă ялхуçалăхĕн çĕршывĕ пулса тăчĕ. Пирĕн рабочисемпе хресченсен социализмлă государстви пур. Çаксене пула пĕтĕм совет халăхĕн материальнăй пурнăçĕ ӳссе, лайăхланса пычĕ. ССР Союзĕнчи халăхсем мĕнпур производительнăй вăйсене аталантарса пыма, материальнăй тата культурăллă пурнăçа çӳле çĕклеме майсем илчĕç. ССР Союзĕнчи халăхсен форми тĕлĕшпе нациллĕ тата содержанийĕ тĕлĕшпе социализмлă культури пур енĕпе те чечекленсе ӳссе пыма пуçларĕ. Çак строй пур испытанисене те чăтса ирттерчĕ, унăн çирĕплĕхĕпе вăйне совет халăхĕ гитлерла Германие хирĕç туса пыракан отечественнăй аслă вăрçă, 1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕнче пуçланнăскер, уйрăмăнах уççăн кăтартса пачĕ. Нимĕçсем совет стройĕ çирĕп мар пуласса шаннă. «Советсен тылĕ нихăçан та хальхи пек çирĕп пулман,—тет Сталин юлташ.—Кирек хăш ытти государство та, хăйĕн территорине пирĕн чухлĕ çухатнă пулсан, йывăрлăха тӳсеймесĕр пĕтсе ларнă пулĕччĕ,—çакă вăл питех те пулма пултарать. Совет стройĕ йывăрлăха çавăн пек çăмăллăн тӳссе ирттерчĕ пулсан, хăйĕн тылне татах та çирĕплетрĕ пулсан, çакă вăл совет стройĕ халĕ пуринчен те çирĕп пулнине пĕлтерет».

Хĕрлĕ Çара тĕреклетесси тата ăна лайăхлатса вăйлатса пырасси пирĕн партин чи пысăк задачисенчен пĕри пулать, тесе Ленин пире пĕр хут кăна мар кăтартса панă. Хамăрăн Хĕрлĕ Çара, хамăрăн Хĕрлĕ Флота тĕреклетес тĕлĕшпе эпир хамăрăн вăйсене шеллесе тăмăпăр, тесе Сталин юлташ тупа тунине эпир пурнăçа кĕртрĕмĕр. Сталин юлташ пире çак пысăк задача çинчен ывăнма пĕлмесĕр аса илтерсе тăчĕ. Вăл пирĕн партие тата пĕтĕм çĕршыва çĕнĕ хăрушлăх çинчен, çĕнĕ интервенци çинчен çулран çулах асăрхаттарса пычĕ. Вăл пире хĕçпăшалпа лайăхлатса тата пĕрмаях вăйлатса пыма кирли çинчен ывăнма пĕлмесĕр астутарса пычĕ. Командирсен кадрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе Сталин юлташ пек вăйлăн никам та тăрăшман. Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота организацилес, хĕçпăшаллантарас тата вĕсене кирлĕ хатĕрсене парса тăрас плансене пурне те вăл хăй туса хатĕрленĕ тата халĕ те хатĕрлесе пырать, хĕçпăшалсене пурне те пĕчĕк детальсем таранах вăл хăй вĕренсе пынă тата халĕ те вĕренсе пырать. Вăл хамăрăн артиллерие, танксене, самолетсене, автоматсене тата ытти хĕçпăшалсене лайăхлатас тĕлĕшпе тăрăшнă тата халĕ те тăрăшать, çак ĕçри новаторсене, пирĕн вăхăтри çак чи паллă çынсене: Ильюшин, Яковлев, Гуревич, Токарев, Дектярев, Костиков, Шпитальный тата ытти нумай юлташсене хавхалантарса тата ӳстерсе пырать.

Ленин пире ССР Союзĕнчи халăхсемпе ытти çĕршывсенчи ĕççыннисем хушшинчи çыхăнусене çирĕплетсе пыма вĕрентнĕ. Эпир Ленинăн çак кăтартăвне пурнăçа кĕртрĕмĕр. Акă мĕншĕн ĕнтĕ ССР Союзне пĕтĕм ĕççыннисем тарăнăн юратса тăраççĕ, акă мĕншĕн ĕнтĕ ССР Союзĕ пирĕн çĕршыври халăхсен ирĕклĕхĕшĕн кăна мар, фашизм пусмăрне кĕрсе ӳкнĕ тата фашизм хăратса тăракан ытти халăхсен ирĕклĕхĕшĕн те алла хĕçпăшал тытса кĕрешет. Социализмлă демократие пурнăçа кĕртнĕ государство ытти демократиллĕ государствăсемпе пĕрле чи тискер те вăрă-хурахла империалистсен партине хирĕç, демократиллĕ ирĕклĕхсен тăшманĕсен партине хирĕç, вăтам ĕмĕрти реакцисемпе черносотенла погромсен партине хирĕç—фашистла партие хирĕç кĕрешет.

Социализмлă çамрăк государствăн пролетариат тăшманĕсене хирĕç, ирĕклĕ халăхсен тăшманĕсене хирĕç, социализмлă государствăн тăшманĕсене хирĕç вăрçăсем туса пымалла пулать, тесе, Ленинпа Сталин 1917 çулти октябрьте влаçа иличчен чылай малтанах асăрхаттарнă. Çавăн пек вăрçăсене Совет государствин хăй пулса тăнă малтанхи кунсенчен пуçласах туса пыма тивнĕ. Малтанхи кунсенчен тытăнсах социализмлă çамрăк республикăна хирĕç, эксплоататорсен влаçне каялла тавăрас тата монархие çĕнĕрен туса хурас тесе, белогвардеецсем кĕрешӳ пуçласа янă.

Германи империалисчĕсем халĕ кăна пулса тăнă социализмлă çамрăк государствăн вăрçă тĕлĕшĕнчи вăйсăрлăхĕпе усă курма шутласа интервенци пуçласа янă вăхăтра Совет государствин положенийĕ уйрăмăнах пысăк хăрушлăхра пулнă. 1918 çулти февралĕн 21-мĕшĕнчех ĕнтĕ В. И. Ленин: «Социализмлă тăван çĕршыв хăрушлăхра!»—тесе воззвани çырнă. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çак воззвание, Совет правительстви мирĕн йывăр условийĕсене йышăнса килĕшĕве алă пусма пулнине пăхмасăр нимĕç оккупанчĕсем наступлени туса пынă вăхăтра пичетлесе кăларнă. «Германи милитаризмĕ вырăс тата Украина рабочийĕсемпе хресченĕсене пăвса вĕлерессишĕн, çĕре—помещиксене, фабрикăсемпе заводсене — банкирсене, влаçа — монархие тавăрса парассишĕн». Çакăн пек хак панă Ленин оккупантсен тĕллевĕсене.

Социализмлă государствăшăн питех те пысăк хăрушлăх тухса тăнă çак вăхăтра Ленин конкретно мĕн тума сĕннĕ-ха? Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ун чухне çапла йышăннă:

1. Çĕршывăн пĕтĕм вăйĕпе средствисене пĕтĕмĕшпех революциллĕ оборона ĕçĕ валли памалла;

2. Советсен тата революциллĕ организацисен пурин те кашни позицинех юлашки тумлам юн юлмиччен хӳтĕлес тăмалла;

3. Чугунçул çинчи организацисен тата вĕсемпе çыхăнса тăракан Советсен çулйĕр аппарачĕсемпе усă курма тăшмана пур мелĕсемпе те чăрмантарса пымалла. Каялла чакнă чухне чугунçул çинчи çуртйĕрсене пĕтерсе тăкмалла тата çунтарса ямалла. Вагонсемпе паровозсене тата ыттисене те пурне те çийĕнчех çĕршывăн аякри вырăнĕсене ямалла;

4. Тырпул тата продовольстви запасĕсене пурне те, мĕнпур хаклă пурлăхсене, вĕсем тăшман аллине лекес хăрушлăх пур пулсан, пĕр сăмахсăрах пĕтерсе тăкмалла. Çак ĕç мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине вырăнти советсен тата вĕсен представителĕсен хăйсен сăнаса тăмалла;

5. Петроградри, Киеври, мĕнпур хуласемпе местечкăсенчи тата саласемпе ялсенчи рабочисемпе хресченсен специалистсем ертсе пынипе фронт линийĕнче окопсем чавма батальонсем организацилемелле;

6. Çав батальонсене буржуази класĕн мĕнпур ĕçлеме пултаракан членĕсене—хĕрарăмсемпе арçынсене—кĕртмелле, батальонсене красногвардеецсем пăхса тăраççĕ; çакна хирĕç тăракансене персе пăрахмалла;

7. Революциллĕ оборонăна хирĕç тăракан, нимĕç буржуазийĕ енче тăракан, çавăн пекех тата совет влаçне сирпĕтсе антарас шутпа империалистла ушкăнсем пулăшнипе усă курма пăхакан мĕнпур изданисене хупмалла; çав изданисен ĕçлеме пултаракан редакторĕсемпе сотрудникĕсене окопсем чавнă çĕре тата ытти оборонăллă ĕçсене мобилизацилемелле;

8. Тăшман агенчĕсене, спекулянтсене, аркатуçăсене, хулигансене тата контрреволюциллĕ агитаторсемпе Германи шпионĕсене преступлени тунă вырăнтах персе пăрахмалла.

Социализмлă çĕршыв хăрушлăх умĕнче! Социализмлă наступлени сывă пултăр!»

Февралĕн 23-мĕшĕнче, тăшман Псков патĕнче тăнă чухне, Хĕрлĕ Çар нимĕçсене малтанхи хут хăватлăн пырса çапнă. Çавăнтан пуçласа эпир çав куна Хĕрлĕ Çарăн кунĕ тесе уявлатпăр.

Ленин çапла ăнлантарса панă: 1917 çулти ноябрĕн 7-мĕшĕнчен пуçласа, власть рабочи класăн аллине куçнă кунран пуçласа, эпир оборонецсем пулса тăтăмăр, «мĕншĕн тесессĕн эпир тăван çĕршыва хӳтĕлессишĕн тăратпăр, эпир оборона пултарулăхĕ çине, çапăçăва хатĕрлентес ĕç çине пысăк тимлĕхпе çавăрăнса пăхма ыйтатпăр».

Ленин çапла каланă: «Çĕршыва экономика тĕлĕшпе çĕклессинчен пуçласа, чугунçулсенчен пуçласа, оборона ĕçне сыхăлăхлăн та тимлĕн хатĕрленмелле, мĕншĕн тесессĕн вĕсемсĕр, мĕнпур çĕрте революциллĕ çирĕп дисциплинăпа самодисциплина тумасăр, кучухнехи вăрçă çинчен калаçни вăл пушă сăмах кăна пулса тăрать».

Виçĕ çул хушши пынă империалистла йывăр вăрçă хыççăн халăха сывлăш çавăрма май парас тесе, Российăн вăрçă пула ывăнса çитнĕ рабочийĕсемпе хресченĕсене ишĕлнĕ хуçалăха ура çине тăратма май парас тесе, арканнă çĕршыва вăрçăн çĕнĕ йывăрлăхĕсенчен çăлса хăварас тесе, совет правительстви Брестри договора алă пуснă. Анчах та Германин империалистла буржуазийĕ, ют пурлăха тискер кайăкла хапсăнаканскер, çав самант совет çĕршывĕ çине килсе тапăнма тата Украинăна, Балтика таврашĕнчи çĕршывсене, Донбаса, Крыма, Çурçĕр Кавказа тытса илме чи майлă самант тесе шутланă. Грузири меньшевиксем хăйсене пулăшма нимĕç генералĕсене чĕннĕ. Нимĕçсем пирĕн çĕршывăн питех те пысăк территорийĕ çинче хуçаланнă. Анчах Германи империализмĕ пурпĕрех поражени тӳсессине Ленин ун чухнех витĕр курса тăнă.

1918 çулти июнь уйăхĕнче профессиональнăй союзсен 4-мĕш конференцийĕнче Ленин каланă сăмаха вулатăн та, унăн сăмахĕсем Германи империализмĕн тискер кайăкĕсене — фашистсене хирĕç пыракан пирĕн паянхи кĕрешĕве те пĕтĕмĕшпех пырса тивнĕн туйăнаççĕ. Ленин çапла калать: «Германия мĕн чухлĕ ытларах çĕнтерӳсем туса пырать, пуринчен те, Германири шултăра буржуазин нумай представителĕсемшĕн те, çавăн чухлĕ çакă уççăнрах куç умне тухса тăрать: вăрçă вăраха кайрĕ, нимĕçсем Хĕвеланăç фронтĕнче хирĕç тăма пултарсассăн та, çакă вăл нимĕçсене вăрçă пĕтес кун патне нимĕн чухлĕ те çывхартмасть, анчах çакă вăл чуралăха кĕрсе ӳкнĕ çĕнĕ çĕршыв туса хурать, çав çĕршыва нимĕçсен отрячĕсен оккупацилеме тата çавна май вăрçа малалла туса пыма лекет. Нимĕçсен çарĕ ишĕлсе пырать, чăн-чăн армирен вăл вăрă-хурахсен, çаратуçăсен шайки, ытти хĕçпăшалсăр халăхсене пусмăрлакансен, çав халăхсенчен юлашки апат-çимĕçсемпе чĕрĕ материалсене сăптăрса илекенсен шайки пулса пырать тата вăл çапла пулса тăрать те. Çавăнпа пĕрлех чуралăха кĕртсе ӳкернĕ çĕршывсенчи халăхсем çакна хирĕç вăйлăн тăраççĕ. Германия мĕн чухлĕ ытларах Европа хĕрринелле куçса пырать, ун умĕнче Англипе Америка тăни, вĕсем Германирен нумай вăйлăрах та маларах тăни, вĕсен производительнăй вăйĕсем нумайраххи çавăн чухлĕ уççăнрах курăнма пуçлать. Мĕнпур машинăсенчен, мĕнпур фабрикăсемпе заводсенчен тăшмана аркатмалли хатĕрсем туса хурас тесе, Англипе Америка хăйсен çĕнĕ те чи лайăх вăйĕсене Европăна вуншар пинĕн ярса тăма вăхăт тупаççĕ».

Çавăн пекех Сталин юлташăн çав вăхăтри «Украинский узел» ятлă статьинчи сăмахĕсем те паянхи пекех хăюллăн та уççăн янăраççĕ, Германи захватчикĕсене хирĕç çĕкленнĕ тулли курайманлăхпа çунса тăраççĕ: «Австрипе Германи империалисчĕсем хăйсен штыкĕсем çинче намăсла çĕнĕ пусмăрлăх илсе килеççĕ, çав пусмăрлăх вăл тутарсен авалхи пусмăрĕнчен нихăш енĕпе те уйăрălса тăмасть. Хĕвеланăçĕнчен тăшман тапăнса килнин пĕлтерĕшĕ çакăнта ĕнтĕ.

Хĕвеланăçĕнчен килекен ютçĕршыв пусмăрне хирĕç Советлă Украина ирĕклĕхшĕн пыракан отечественнăй вăрçа çĕкленет. Украинăра пулса иртекен событисен пĕлтерĕшĕ çакăнта ĕнтĕ. Нимĕçсем хăварт пырса çапса икĕ мулкача тытма ĕмĕтленнинчен — тырпул тупнма та, Советлă Украинăна çĕмĕрсе тăкма та хапсăннинчен—ютçĕршыв пусмăрçисен Украинăри 20 миллионлă халăха хирĕç пуçласа янă вăраха тăсăлакан вăрçи пулса каять. Нимĕçсем Украина халăхĕнчен унăн тырпулĕпе ирĕклĕхне туртса илесшĕн хапсăнаççĕ. Çисе кӳпĕннĕ империалистла кайăк Советлă Украинăра хăйĕн ĕнсине хуçать — событисен нимĕн хĕрхенӳсĕр логики çавăнталла туртмасть-и-ха ĕнтĕ?»

Германин çав интервенцийĕ мĕнле пĕтнине пурте пĕлеççĕ. Германи çарĕ ун чухне çĕрсе ишĕлсе аннăччĕ. ССР Союзĕнчи халăхсен курайманлăхĕ çавăрса илнĕ Германи çарĕ, хăйĕн положенийĕ пачах та шанчăксăррине курса, мĕнпур хĕçпăшалне çул çинче пăрахса хăварса, паникăна ӳксе каялла чакса пынă.

Пĕтĕм Российăри Советсен 6-мĕш чрезвычайнăй съездĕнче Ленин хăйĕн сăмахĕнче, Германи империализмне 1918 çулта çапса аркатнине кăтартса парса, çапла каланă: «Малтанах вăл (Германи империализмĕ) Европăн тăватă пайĕнчен виçĕ пайне çити саралса самăрălса кайрĕ, унтан вара вăл, хăй хыçĕнчен çавтери хăрушла усал шăршă хăварса, çавăнтах лаплатса çуралчĕ».

1918 çулта пирĕн çĕршыв питех те йывăр положенире пулни çинчен Сталин юлташ 1941 çулти ноябрĕн 7-мĕшĕнче Мускаври Хĕрлĕ площадьре Хĕрлĕ Çар парадĕнче каланă хăйĕн сăмахĕнче аса илтерчĕ:

«Пирĕн çĕршыв хальхинчен йывăртарах положенире пурăннă кунсем те пулнă. Аса илĕр-ха 1918 çула, ун чухне эпир Октябрьти революци пулнăранпа пĕр çул тултарнине уявланă. Пирĕн çĕршывăн тăваттăран виçĕ пайĕ ун чухне ютçĕршыв интервенчĕсен аллинче пулнă. Украинăна, Кавказа, Вăтам Азие, Урала, Çĕпĕре, Инçетри Хĕвелтухăçне эпир вăхăтлăха çухатнă пулнă. Пирĕн союзниксем пулман, пирĕн Хĕрлĕ Çар пулман, — эпир ăна туса йĕркелеме кăна тытăннă, — пирĕн тырпул çитмен, хĕçпăшалсем çитмен, тумтирсем çитмен. Ун чухне пирĕн çĕршыв çине 14 государство тапăнса килнĕ. Анчах эпир пуçа усса хуйхăрман, хăраса ӳкмен. Вăрçă вучĕ айĕнче ун чухне эпир Хĕрлĕ Çара организацилене, хамăрăн çĕршыва çар лагерĕ туса хунă. Аслă Ленинăн хăвачĕ ун чухне интервентсене хирĕç вăрçма пире хавхалантарса пынă. Мĕн куртăмăр-ха эпир? Эпир интервентсене çĕмĕрсе тăкрăмăр, çухатнă территорисене пĕтĕмпех каялла илтĕмĕр те çĕнтерӳ турăмăр».

Çав кĕрешӳре Сталин юлташ, 1918—1920 çулсенчи граждан вăрçинче тунă çĕнтерӳсен организаторĕ, Хĕрлĕ Çарăн тата продовольстви ĕçĕн организаторĕ, фронтăн чи хăрушă участокĕсенчи: Хĕвелтухăçĕнчи, Кăнтăрти, Хĕвеланăçĕнчи тата Çурçĕрти операцисене тӳрех хăй ертсе пыракан, çавтери аслă вырăн йышăнса тăрать. Сталин юлташ Ленин юлташпа пĕрле пулса совет халăхне çĕнтерӳ тума пĕтĕçтерчĕ. Вĕсем совет халăхне унччен историре пулман отечественнăй аслă та хăватлă вăрçа çĕкленме хавхалантарчĕç, вĕсем империализмлă вăрçăра ывăнса çитнĕ рабочисемпе хресченсен чĕрисене çĕнтерӳ шанчăкĕ кӳчĕç. Çав вăрçăра ӳссе çитĕннĕ Хĕрлĕ Çарăн войскисем, чĕртаварсемпе продовольстви паракан облаçсенчен татăлнăскерсем, сивĕпе выçлăх тӳсекенскерсем, тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçнă, вĕсем пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса тăнине пула, хăйсем мĕншĕн кĕрешнине ăнланса илнине пула, хурçă пек çирĕп дисциплинăна пула, халăха чĕререн парăнса тăнине пула тата Хĕрлĕ Çар Ленинăн—Сталинăн пурне те çĕнтерекен ялавĕпе тăрса кĕрешнине пула çĕнтерчĕç.

Кĕрешӳри йывăрлăхсем темĕн пек пысăк пулсассăн та, совет халăхĕ фронта мĕн кирлине пĕтĕмпех нимĕн хĕрхенмесĕр парса тăнă.

«Революционный фронт» хаçатра тухнă «Кăнтăрти вăрçă ĕçĕсем пирки» ятлă статьяра Сталин юлташ 1920 çулти январь уйăхĕнче çапла çырнă: «Совет правительстви фронта пулăшасси çинчен чĕнсе каласассăнах, Россия çавăнтах çĕнĕрен çĕнĕ полксем кăларса тăрататъ».

Ленинпа Сталин Хĕрлĕ Çара уйрăмăнах юратса пăхса çитĕнтерсе пынă. Вĕсем Хĕрлĕ Çаршăн, ăна политика тĕлĕшĕнчен вĕрентсе çитĕнтерессишĕн, ăна шухăш-кăмăл енчен çӳллĕ пусăма çĕклессишĕн, унăн боевой дисциплинине çирĕплетессишĕн, ăна хĕçпăшаллантарассишĕн тата пур тĕрлĕ материалсем те çителĕклĕ парса тăрассишĕн пĕтĕм вăя хурса тăрăшнă. Ленинпа Сталин Хĕрлĕ Çара политика тĕлĕшĕнчен вĕрентсе çитĕнтерме çавтери паха аппарат туса хучĕç. Политикăллă комиссарсенчен тăракан çав аппарат паянхи кун та, 1941—1942 çулти отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче те, Хĕрлĕ Çарăн речĕсене пĕтĕçтерсе çирĕплетсе тăрать, Хĕрлĕ Çарăн халăха парăннă командирĕсен авторитетне çĕклеме пулăшса пырать. Хăйсен паттăрлăхпа çирĕплĕх тата геройлăх примерĕсемпе çарти большевиксем хăйсем хыççăн пирĕн тăван çĕршывшăн, совет çĕршывĕшĕн, Лениншăн, Сталиншăн Хĕрлĕ Çар çапăçăва ертсе каяççĕ.

Отечественнăй вăрçăра халăха çĕнтерӳ кӳрес тесе, Ленин тата Сталин тыла çирĕплетесси çине, тылпа фронта пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнтарса пĕрлĕхлĕ тăвасси çине çавтери тимлĕн çавăрăнса пăхнă. «Пурте Деникина хирĕç кĕрешме» ятлă хăйĕн çырăвĕнче Ленин çапла çырнă: «Совет республикине тăшман çавăрса илнĕ. Çĕршыв халĕ сăмахпа мар, ĕçпе пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ пулса тăма тивĕçлĕ, мĕнпур учрежденисен пĕтĕм ĕçне вăрçă вăхăтне кура туса пымалла, вăрçă ыйтнă пек урăхлатса çĕнетмелле».

Большевиксен партийĕн 7-мĕш съездĕнче Ленин çапла чĕнсе каланă: «Самодисциплина, иксĕлми çирĕп дисциплина тăвăр, унсăрăн сирĕн нимĕç атти айĕнче халь выртнă пекех, выртма лекĕ, халăх кĕрешме вĕренсе çитиччен, хăйĕн çарне, тарма мар, халиччен пулман инкек-синкексем тӳссе ирттерме пултаракан хăйĕн çарне тума вĕренсе çитиччен сирĕн нимĕçсен атти айĕнче выртма лекет».

Ленинпа Сталин дисциплинăллă пулнин, хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр кĕрешнин, ĕççыннисене пĕтĕм чун-чĕререн парăнса тăнин аслă примерĕсене кăтартса панă, хăйсен чĕнĕвĕсемпе Хĕрлĕ Çара геройла ĕçсем тума пĕр хутчен мар хавхалантарнă.

«Массăсен геройлăхĕ, — тесе çырать Ленин, — эпир тăшмана çĕнтермелли условисенчен пĕри пулса тăрать. Пире хурçă пек çирĕп дисциплина, ăнлануллă дисциплина, революциллĕ дисциплина кирлĕ. Вăрçă вăхăтĕнче тылри кирек мĕнле йĕркесĕрлĕх те, кирек мĕнле дисциплинăсăрлăх та фронта çавтери пысăк сиен кӳрет, фронта дезорганизацилет».

Дисциплинăна пăсакансене Ленин хаяррăн питленĕ. Хамăрăн социализмлă тăван çĕршыва хӳтĕлес граждăнла аслă тивĕçлĕхе пурнăçа кĕртессинчен пăрăнакансене Ленин предательсем, сутăнчăксем тесе шутланă. Рабочисемпе хресченсем патне янă çырăвĕнче вăл çапла каланă:

«Кам мĕнпур чĕререн тата пĕтĕм вăйран Хĕрлĕ Çара пулăшмасть, кам çарта йĕркелĕхпе дисциплинăна тытассишĕн пĕтĕм вăйне хумасть, çавă вăл предатель те сутăнчăк, çавă вăл колчаковщина майлă тăрать, çавăн пеккисене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе тăкмалла. Тĕреклĕ Хĕрлĕ Çар пулсан, пире никам та çĕнтерейместь».

Камăн резервсем ытларах, камăн вăй-хăват илмелли çăлкуçĕсем ытларах, камăн халăх хушшинче чăтăмлăх ытларах, вăрçăра çавă çĕнтерет, тесе вĕрентеççĕ пире Ленинпа Сталин. Апла пулсан пирĕн хамăрăн тăван çĕршыв умĕнчи таса тивĕçлĕх — ытларах резервсем тăвасси, вăй-хăват ытларах

*Малалли 3-мĕш страницăра*

ЛЕНИН, СТАЛИН ТАТА СВЕРДЛОВ ГРАЖДАН ВĂРÇИ ВĂХĂТĔНЧЕ.

# Ленинпа Сталин—совет халӑхӗн ҫӗнтерӗвӗсен организаторӗсем

## ЮЛАШКИ

пухасси, ҫав мӗнпур вӑйсене мобилизацилесси, халӑхсен кунҫулӗ пирки ӗҫ таталакан ҫак хаярта йывӑр кӗрешӳре чи пысӑк чӑтӑмлӑх кӑтартасси пулать.

Ленинпа Сталин кӗрешӳре хӑрама пӗлмен, хӑрама пӗлмеҫҫӗ те, вӗсем пире шиклӗхсӗр пулма вӗрентеҫҫӗ. Рабочи класс «тӑшмана парӑниччен, вилни ырӑрах» текен хӑйӗн лозунгне пурнӑҫа кӗртме хатӗр тӑни историллӗ фактор кӑна мар, вӑл ҫакӑнпа пӗрлех татӑклӑ та ҫӗнтерӳ тума май паракан фактор пулса тӑрать.

Вӑрҫӑн чи кирлӗ операцийӗсене пур чухне те хӑй ертсе пынӑ Сталин юлташ Ленин ҫулӗсене ҫирӗппӗн пурнӑҫа кӗртсе пынӑ, мӗншӗн тесен ҫав ҫулйӗр вӑл пӗртен-пӗр тӗрӗс ҫулйӗр, ҫӗнтерӳ патне илсе ҫитермелли ҫулйӗр пулса тӑнӑ. 1918 ҫулти июнӗн 1-мӗшӗнче «Правда» хаҫатра пичетленсе тухнӑ «Донпа Ҫурҫӗр Кавказӗ ҫинчен» ятлӑ хӑйӗн статьинче Сталин юлташ ҫапла ҫырнӑ: «Захватчиксемпе пусмӑрҫӑсене отпор пама мӗнпур вӑйсене нимӗн юлмиччен мобилизацилемест пулсассӑн, совет влаҫӗ хӑйне хӑй чӗрӗллех пытарнӑ пулӗччӗ,—ҫавӑн пек мобилизацие вӑл тӑватех», тенӗ.

Ҫав шухӑша Сталин юлташ хӑйӗн ытти тӗрлӗ чылай статьисенче те палӑртать. Вӑл вӑхӑтра Деникин Тулӑ патӗнчен инҫех мар тӑнӑ. Орел тӑшмансен аллинче пулнӑ. Тӑшман Мускава хӑратса тӑнӑ, деникинецсем Мускавра парад тума хатӗрленнӗ, Деникин генерал валли, Кремле пырса кӗмешкӗн, шурӑ лаша туянма пуҫтарӑннӑ; шӑпах ӗнтӗ нимӗҫсем 1941 ҫулти октябрь уйӑхӗнче Мускава ҫӗмӗрсе кӗрсе Кремле йышӑнса илме хатӗрленнӗ пекех.

Ҫак вӑхӑтра Сталин юлташ халӑха ӗҫҫыннисен вӑйне шанса тӑма вӗрентнӗ, совет тылӗн ҫирӗплӗхӗ, пиҫӗлӗхӗ мӗн тери пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине кӑтартса панӑ.

«Чи пысӑк тӑшман, Деникин, Тула хулин—пирӗн армие патронсемпе винтовкӑсем, пулеметсем парса тӑракан тӗп вучахӑн хапхи умӗнче тӑрать. Анчах ҫапах та Россия ҫак кризисран та тӗрӗс-тӗкелех тухать. Сӑлтавӗсем ҫавсемех: пирӗн тыл, апла пулсан пирӗн ҫарӑн тылӗ те, пысӑк ҫирӗплӗхлӗ, пысӑк пиҫӗлӗхлӗ пулни».

Ҫапла пулнӑ 1918—1920 ҫулсенче. Вӑл ҫулсенче ҫӗнтерӳ тума пулӑшнин тӗп сӑлтавӗ—совет халӑхӗн пуҫӗнче, большевиксен партин пуҫӗнче, Хӗрлӗ Ҫарӑн пуҫӗнче пирӗн партипе совет государствин никӗсне хывакан аслӑ ҫынсем тӑни, вӑрҫӑ ӗҫӗнчи аслӑ стратегсем—Ленинпа Сталин тӑни пулнӑ.

Интервентсемпе белогвардеецсене аркатса тӑкни совет халӑхне чылай вӑрӑм вӑхӑтлӑха сывлӑш ҫавӑрса илме май панӑ. Ҫав ҫулсем вӑхӑтӗнче, чӑнах та ӗнтӗ, пӗр хут ҫеҫ мар вӑрҫӑ хӑрушлӑхӗ капланса килнӗ. Совет Союзне интервентсем пӗр хут ҫеҫ мар хӗреслӗ походпа хӑратрӗҫ, Совет Союзӗ ҫине Хӗвеланӑҫӗнчен те, Хӗвелтухӑҫӗнчен те провокацилле тапӑнмашкӑн пӗр хут ҫеҫ мар хӑтланса пӑхрӗҫ. Сталин юлташ ертсе пынипе ҫав ҫулсем хушшинче Совет ҫӗршывӗ таттисӗрпе мирлӗ политикӑна пурнӑҫа кӗртсе пычӗ, анчах та ҫав вӑхӑтрах эпир ҫӗнӗ интервенцин хӑрушлӑхӗ ҫинчен нихӑҫан та манмарӑмӑр. Ҫак хӑрушлӑх ҫинчен Сталин юлташ партин съезчӗсемпе конференцийӗсенче тата хӑй пичет урлӑ тухса каланисенче темиҫе хутчен те асӑрхаттарчӗ. Ку енӗпе партин 16-мӗш, 17-мӗш, 18-мӗш съезчӗсене, Сталин юлташӑн Иванов комсомолец патне янӑ ҫырӑвне аса илсен те ҫителӗклӗ.

1939 ҫулта, гитлерла Германия пире хирӗҫ вӑрҫӑ пуҫлассине сирсе ярас тесе,—ун чухне ку хӑрушлӑх куҫ кӗретӗнех курӑнса тӑратчӗ,—Совет правительстви Германи правительствипе пӗр-пӗрин ҫине тапӑнмалла марри ҫинчен договор турӗ. Эпир Германипе пӗр-пӗрин ҫине тапӑнмалла марри ҫинчен договор туни пире мӗн енчен усаллӑ пулчӗ-ха? Ҫак ыйту ҫине Сталин юлташ ҫапла ответ панӑ: «Эпир хамӑрӑн ҫӗршыва ҫулталӑк ҫурӑ хушши мирлӗ пурнӑҫпа пурӑнма май патӑмӑр, тата, фашистла Германия пакта пӑхмасӑрах пирӗн ҫӗршыв ҫине тапӑнма хӑйсан, ӑна отпор пама хамӑрӑн вӑйсене хатӗрлемешкӗн май илтӗмӗр. Ҫакӑ вӑл пирӗншӗн чӑнласах усаллӑ тата фашистла Германишӗн усаллӑ мар».

Эпир ҫав вӑрҫа пуҫласа ярасшӑн марччӗ. Халӑх интересне сыхласа пыракан Совет правительстви пӗр пӑрӑнмасӑр Ленинпа Сталинӑн ӗҫлӗ политикине пурнӑҫа кӗртсе пычӗ. Анчах та тӑшман пирӗн ҫӗршыв ҫине ҫӗмӗрсе кӗрсен, Сталин юлташ фашистла захватчиксене хирӗҫ отечественнӑй тӗрӗслӗхлӗ вӑрҫа тухма чӗнсе мӗнпур совет халӑхне ҫӗклерӗ.

1942 ҫулхи январӗн 22-мӗшӗнче ҫак вӑрҫӑ пуҫланни 7 уйӑх тултарать. Ҫак 7 уйӑх хушшинче Германи захватчикӗсем хӑйсем йышӑнса илнӗ совет территорийӗ ҫинче, вилнисемпе аманнисене тата нимӗн хыпарсӑр пӗтнисене пӗрле шутласан, 7 миллион ҫын ытла ҫухатнӗ. Вӗсем танксем, самолетсем, тупӑсем тата ытти тӗрлӗ хӗҫпӑшалсемпе боеприпассем питӗ нумай ҫухатнӑ. Вӗсем хӑйсен «Германи ҫарне ҫӗнтерекен никам та ҫук» текен ухмахла, вилӗмсӗрлӗ, фантазиллӗ ӗненӗвне ҫухатнӑ; малтан вӗсем ҫак ӗненӳпе усӑ курса Европӑри халӑхсене терорласа пынӑ. Ҫак отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑра паттӑр Хӗрлӗ Ҫар тата мӗнпур совет халӑхӗ Ленин — Сталин партийӗ мӗн тери пысӑк вӑя воспитани парса ҫитӗнтернине кӑтартса пачӗҫ. Совет халӑхӗ гитлерла Германие хирӗҫ туса пыракан вӑрҫӑн 7 уйӑх хушшинчи вӑхӑчӗ ӗнтӗ совет государстви, совет стройӗ пур йывӑрлӑхсене те чӑтса иртернине, рабочисемпе хресченсен союзӗ пур йывӑрлӑхсене те чӑтса иртернине кӑтартса пачӗ. Совет халӑхӗсен Ленинпа Сталин пӗтӗҫтерсе ҫирӗплетнӗ аслӑ туслӑхӗ ӗмӗр арканми ҫирӗп пулни курӑнчӗ. Совет государствин политикӑллӑ системи, халӑх хуҫалӑхӗн вӑйӗсем, ҫар ӗҫӗнчи система пӗтӗм тӗнче умӗнче пирӗн ҫавтери пысӑк вӑя кӑтартса пачӗҫ. Халӗ ӗнтӗ ҫак вӑя тӑшман та туйса илчӗ. Германипе унӑн союзникӗсен ҫынсемпе материальнӑй ресурсӗсене чылаях иксӗлтернӗ, ҫавтери пысӑк ҫухатусен хакӗпе Германия, 1918 ҫулти интервенци вӑхӑтӗнче йышӑнса илнӗ пекех, пирӗн ҫӗршывра питӗ анлӑ территори йышӑнса илчӗ. Халӗ ӗнтӗ ҫав пусмӑрҫӑсен, вут тивертекенсен, палачсен вӑрӑ-хурахла, мародерла ҫарӗ, деморализациленнӗскер, пытӑтланса кайнӑскер, пӗр шухӑша ҫеҫ—совет ҫӗршывӗнчен чӗрӗ тухса каяс шухӑша ҫеҫ тытаканскер, каялла чакса пырать.

Хӗрлӗ Ҫар пӗр ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн тепӗр ҫӗнтерӳ тӑвать. Халӗ ӗнтӗ вуншар хуласене, пиншер ялсене тата халӑх пурӑнакан ытти пунктсене ирӗке кӑларнӑ. Фашистла ирсӗрсенчен тасатнӑ совет ҫӗрӗ ҫинче хӑйсен ҫирӗплӗхӗпе паттӑрлӑхне кӑтартса панӑ совет ҫыннисен пурнӑҫӗ ҫӗнӗрен ҫуралма тытӑнать. 1918—1920 ҫулсенчи отечественнӑй вӑрҫӑра тӑшмана аркатса тӑкма пулӑшнӑ вӑйсем халӗ ҫавтери ӳссе пысӑкланса кайрӗҫ.

Сталин юлташ 1941 ҫулти ноябрӗн 7-мӗшӗнче Хӗрлӗ площадьре каланӑ сӑмахӗнче 23 ҫул хушшинче мӗнле улшӑнусем пулса иртнине кӑтартрӗ.

«Халӗ пирӗн ҫӗршывӑн положенийӗ 23 ҫул ӗлӗкрех пулнинчен нумай лайӑхрах. Пирӗн ҫӗршыв халӗ промышленность енӗпе те, продовольстви енӗпе те, чӗртавар енӗпе те 23 ҫул ӗлӗкрех пулнинчен нумай хут пуянрах. Пирӗн халӗ союзниксем пур, пирӗнпе пӗрле вӗсем нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пӗрлӗхлӗ фронт тытса пыраҫҫӗ. Пире халӗ гитлерла тиранин пусмӑрӗ айне кӗрсе ӳкнӗ Европӑри халӑхсем пурте кӑмӑллӑса пулӑшса пыраҫҫӗ. Пирӗн халӗ питех те паха ҫарпа питех те паха флот пур, вӗсем пирӗн тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхне хӑйсен кӑкӑрӗпе тӑрса хӳтӗлеҫҫӗ. Пирӗн продовольстви енӗпе те, хӗҫпӑшалсем енӗпе те, тумтирсем енӗпе те пысӑк ҫитменлӗхсем ҫук. Пирӗн пӗтӗм ҫӗршыв, пирӗн ҫӗршыври халӑхсем пурте хамӑрӑн ҫарсене, хамӑрӑн флота тӗрек парса тӑраҫҫӗ, нимӗҫ фашисчӗсен захватчикла кӗтӳвӗсене ҫӗмӗрсе тӑкма ҫарпа флота пулӑшаҫҫӗ. Ҫынсем тӗлӗшпе пирӗн резервсем вӗҫӗ-хӗррисӗр нумай. Аслӑ Ленинӑн хӑвачӗ тата унӑн ҫӗнтерӳллӗ ялавӗ пире халӗ, 23 ҫул ӗлӗкрех хавхалантарнӑ пекех, отечественнӑй вӑрҫӑ туса пыма хавхалантараҫҫӗ.

Эпир нимӗҫ захватчикӗсене ҫӗнтерме пултаратпӑр тата ҫӗнтермелле те, ҫакӑн пирки иккӗленме пулать-и вара?»

1918 — 1920 ҫулсенчи пекех, халӗ те ҫӗнтерӳсен организаторӗ Ленин—Сталин партийӗ, унӑн ҫулпуҫӗ, совет государствин руководителӗ, Хӗрлӗ Ҫарпа Хӗрлӗ Флотӑн верховнӑй главнокомандующийӗ—Сталин юлташ пулса тӑрать.

Вӑрҫӑ пуҫланиччен чылай малтан Сталин юлташ совет государствине ҫирӗплетмелли плана туса хатӗрленӗ. Вӑл сталинла виҫӗ пятилеткӑн планӗсене туса хатӗрленӗ тата вӗсене пурнӑҫа кӗртессине ертсе пынӑ. Ҫав пятилеткӑсене пула ҫеҫ пирӗн ҫӗршыв тӑшмана мӗнпур тӗрлӗ хӗҫпӑшалпа хӗҫпӑшаллантарса тӑрса кӗтсе илме пултарчӗ. Ҫав пятилеткӑсене пула ҫеҫ хӑватлӑ, вӑйлӑ Хӗрлӗ Ҫар тӑшмана аркатса пыма май илчӗ, пирӗн ҫӗршывра туса лартнӑ вӑйлӑ авиаци завочӗсем, орудисем, машинӑсем, автомобильсем, тракторсем тӑвакан заводсем, колхоз строй ҫӗршыва вӑрҫӑ туса пыма мӗн кирлине пурне те парса тӑраҫҫӗ, совет халӑхӗ Ленин—Сталин партин ялавӗ таврӑ, хӑйӗн юратнӑ тата аслӑ ҫулпуҫӗ Сталин юлташ таврӑ пӗтӗҫсе тӑрать.

Пӗтӗм тӗнчипех ӗҫҫыннисем Сталин юлташӑн ятне, В. И. Ленинӑн ячӗ пекех, мӗнпур кӑмӑл-туйӑмран сума суса, ҫавтери юратса чӗрере тытаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та Сталин юлташ халӑхсен пурнӑҫӗнче, пирӗн пурнӑҫра, пирӗн ӑс-тӑнра, В. И. Ленин паллӑ вырӑн йышӑнса тӑнӑ пекех, питӗ паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрать.

Советсен республикишӗн 1918 — 1920 ҫулсенчи чи хӑрушӑ пулнӑ кунсенче, тӑшман унӑн пурнӑҫӗн центрӗсене, унӑн кунҫулне хӑратса тӑнӑ вӑхӑтра, Мускавран Ленинӑн, большевиксен партийӗпе совет правительстви руководителӗн сасси янӑраса кайнӑ. Ленин ҫӗршыв оборонине организациленӗ тата пӗтӗм тӗнчене, мӗнпур ӗҫҫыннисене халӑхӑн чӑн-чӑн ҫулпуҫӗн образецне, хӑрушлӑх умӗнче шикленсе ӳкме пӗлменскерӗн тата чи йывӑр положенисенчен тухмалли ҫула шыраса тупма пӗлекенскерӗн образецне кӑтартса панӑ. Халӗ, ССР Союзӗ умне 1941 ҫулта тухса тӑнӑ чи хӑрушӑ уйӑхсемпе кунсенче, аслӑ отечественнӑй вӑрҫӑн хаяр кунӗсенче, тӑшман Мускавпа Ленинград патне ҫӗмӗрсе пырса ССР Союзӗн пурнӑҫне хӑратса тӑма тытӑннӑ тапхӑрта, Сталин юлташӑн сасси ҫавӑн пекех шанчӑклӑн илтӗнет, Сталин юлташ Хӗрлӗ Ҫарӑн, мӗнпур совет халӑхӗн вӑйне хурҫӑ пек ҫирӗп алӑпа чи хаяр тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫӑва ертсе пырать, Сталин юлташ чӗннипе полк хыҫҫӑн полк фронта кайса, тӑшмана аркатаҫҫӗ. Сталин юлташӑн сасси кӗрешӗве хавхалантаракан чӗнӳ пулса тӑрать, вӑл пӗтӗм тӗнчери халӑхсемпе миллионшар ҫынсен чӗрине тӑшмана пурпӗрех аркатса тӑкас шанчӑк, ҫӗнтерӳ пирӗнте пулас шанчӑк кӗртет.

Аслӑ Ленинӑн образӗ ӗмӗрне те сӳнсе тӗксӗмленес ҫук. Унӑн ҫӗнтерӳллӗ ялавӗ пире отечественнӑй вӑрҫӑн ҫак кунӗсенче ҫул кӑтартса пырать. Сталинӑн кӑкӑрӗнче Ленинӑн чӗри тапса тӑнине эпир пӗлетпӗр. Ҫав чӗре паттӑрлӑхпа, мӗнпур ӗҫҫыннисене юратнипе, совет халӑхне юратнипе тулса тӑрать. Вӑл ӗҫҫыннисен тӑшманӗсене хирӗҫ ҫӗкленнӗ хаяр курайманлӑхпа ҫунса тӑрать, пирӗн чӗресем ҫав аслӑ чӗрепе пӗр туйӑмпа тапаҫҫӗ. Пирӗн вӑй-хӑват, пирӗн шухӑш-кӑмӑлсем аслӑ тӗллевсене пурнӑҫа кӗртме хавхаланаҫҫӗ, ҫак тӗллевсене пурнӑҫа кӗртессишӗн пирӗнтен кашниех хӑйӗн пурнӑҫне те пама хатӗр.

Эпир Ленинӑн — Сталинӑн ҫӗнтерӳсемпе чапа тухнӑ мухтавлӑ ялавӗ айӗнче кӗрешетпӗр. Ҫак ялав айӗнче кӗрешсе Российӑри халӑхсем 25 ҫул ӗлӗкрех, 1917 ҫулта, патша монархин пусмӑрне, харампырсен, эксплоататорсен влаҫне хӑйсен ӗнси ҫинчен сирсе пӑрахрӗҫ. Ҫак ялавпа совет халӑхӗ 1918—1920 ҫулсенчи отечественнӑй вӑрҫӑра ҫӗнтерӳ турӗ. Ҫак ялав айӗнче совет халӑхӗ тӗнчере чи малтанхи социализмлӑ хӑйӗн тӑван ҫӗршывне туса хучӗ. Ҫак ялав айӗнче паян, Сталин юлташ ертсе пынипе, Хӗрлӗ Ҫарӑн боецӗсем, командирӗсемпе политработникӗсем [illegible]

ЛЕНИН КРАСНОГВАРДЕЕЦСЕМ ПАТЕНЧЕ

# Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗсенче

## Большевиксем-танкистсем

Хӗллехи тӗксӗм ир. Ҫӗр ҫийӗпе, ҫурт тӑррисем урлӑ йывӑр пӗлӗтсем вӑраххӑн шӑвӑнса иртеҫҫӗ. Инҫех те мар минӑсем час-часах ҫурӑлса кайни, пулемет хӑвӑрттӑн шатӑртатни илтӗнет. Пирӗн пехотинецсен чаҫӗ, яла вырнаҫса ларнӑ тӑшмана ҫапса кӑларса, наступлени туса пырать. Виҫӗ талӑк хушши ӗнтӗ пӗр чарӑнмасӑр ҫапӑҫу пырать. Ку участока противник питӗ пысӑк вӑй — артиллерипе миномет батарейисем тата питӗ нумай автомат-хӗҫпӑшалсем пухса тӑратнӑ. Пирӗн пехотинецсене пулӑшма кунта Новиков юлташ ертсе пыракан танковӑй чаҫе ярса панӑ.

Пуҫламӗш позицие тухсан, танкистсем хӑйсен машинисене питӗ ӑста маскировка тунӑ пирки, вӗсене темиҫе метртан та уйӑрса илме питӗ хӗн. Тӑшманӑн ҫирӗплетнӗ районне татса кӗрсе, пехота валли ҫул тасатмалла пулнӑ. Парти бюровӗн секретарӗ политрук Горбунов экипаж патне кайрӗ. Вӑл ҫапӑҫӑва каякан боецсемпе, командирсемпе кашни кунах калаҫать. Боевой приказа пурнӑҫа кӗртес умӗн юлташла ӑшӑ сӑмах каланине, алла хытӑ чӑмӑртанине фронтовиксем нимӗнрен ытларах хаклаҫҫӗ.

Ял тулашӗнче, улӑм купи айӗнче партбюро секретарӗ Власов лейтенантӑн экипажне аран-аран шыраса тупрӗ. «Сире шыраса та тупас ҫук! — тесе шӳт турӗ политрук. — Пит те тӗплӗ пытанса ларнӑ!»

— Машина ҫапӑҫӑва кӗрсе кайма хатӗр, пурте йӗркеллӗ, политрук юлташ! — тесе тавӑрчӗ танк командирӗ Вара боевой задачӑна мӗнле татса парасси ҫинчен, фронтри геройсен чаплӑ ӗҫӗсем ҫинчен, экипаж хатӗрри ҫинчен кӗске те кӑмӑллӑ калаҫу пуҫланчӗ. — Нимӗҫсене пӗр хут кӑна ҫапмастпӑр вӗт! — терӗ пулеметчик Якименко. — Ҫур ҫул хушши ахаль ҫапӑҫмарӑмӑр — вӗренсе ҫитрӗмӗр. Манӑн тата Лукьяненкон пӗр ыйту пур: ҫапӑҫу умӗн пирӗн коммунист пулас килет.

— Мӗнех вара, сирӗн экипаж ҫапӑҫура чапа тухнӑ. Ҫырӑр заявлени.

Ҫавӑнтах хута броня плити ҫине хурса заявлени ҫырчӗҫ. Сивӗ хурҫӑ вӗсен аллисене ӑшалать, анчах чӗрере ӗмӗр сӳнми вут ялкӑшать. Кун умӗн вӗсем нумай та тӗплӗн шухӑшланӑ. Парти бюровӗнчен хӑйсене большевиксен партин ретне илме ыйтиччен ытларах та паллӑрах ӗҫсем тума тӑрӑшнӑ. Вӗсем чӑнах та пысӑк, чаплӑ ӗҫсем турӗҫ, чӑн-чӑн большевиксем пек, тӑван ҫӗршывӑн шанчӑклӑ ывӑлӗсем пек, ҫапӑҫнӑ.

Атака пуҫланни ҫинчен панӑ сигнала экипаж боевой машинӑсем патӗнче кӗтсе илчӗ. Танксем юра вӗҫтерсе малалла тапса сикрӗҫ. Шеляпинӑн экипажӗ тӑшманӑн ҫирӗплетнӗ рубежне пуринчен малтан таптаса тӑкса противникӑн окопӗсем тӑрӑх калле-малле ҫавӑрӑнса ҫӳреме тытӑнчӗ. Шеляпинӑн танкӗ тӑшманӑн танксене хирӗҫ пемелли тупписен виҫӗ батарейине таптаса лутӑркаса тӑкрӗ, тӑшманӑн хӳтлӗхре пытанса тӑракан икӗ танкне сывӑхрах персе пӑрахрӗ. Паттӑр экипаж таврӑ снарядсем сывӑхрах та сывӑхрах ҫурӑла-ҫурала каяҫҫӗ, анчах вӑл ҫапах тӑшманӑн пулемечӗсемпе миномечӗсене пӗтерсе пырать, нимӗҫсен таракан салтакӗсемпе офицерӗсене пере-пере пӑрахать.

«Акӑ мӗнле вӗсем большевиксем ҫапӑҫура!» — тесе шухӑшларӗ Лукьяненко. Вара унӑн та Шеляпинпа юнашар пулас килсе кайрӗ. Анчах та танк командирӗ ӑна урӑх еннелле кайма хушрӗ. Унӑн машини те противникӑн хирӗҫ тӑмалли вырӑнӗсене таптаса, аркатса пырать. Акӑ, юнашарах, темиҫе метртра ҫеҫ тӑшманӑн танксене хирӗҫ пемелли икӗ туппи курӑнса кайрӗ. Вӗсем наступлени тӑвакан танк ҫине питӗ вӑйлӑн персе тӑнӑ. Танк сасартӑк пӑрӑнчӗ. Унӑн гусеницисем хӑйсен ӗҫне турӗҫ, Василенко пулемечӗ, пехота валли ҫул тасатса, пӗр диск ҫеҫ мар пушатрӗ.

Сасартӑк Лукьяненко Власовӑн сассине илтрӗ: «Шеляпина ҫӑлма мӗнпур вӑйпа малалла!» Куҫа чи малтанах ҫунакан танк курӑнчӗ: тӑшманӑн снарячӗ хӑрушӑ машинӑна вут тивертсе янӑ. Анчах Шеляпина ҫӑлмашкӑн сылтӑм енчен те, сулахай енчен те ытти танкистсем вӗҫтерсе пыраҫҫӗ. Вӗсем вут сӳнтерме машинӑран сиксе тухнӑ паттӑрсене хӳтӗлеҫҫӗ. Пушара сӳнтерчӗҫ, машинӑна ҫӑлса хӑварчӗҫ. Анчах та паттӑр командир-большевик вилмеллех аманнӑ. Вара танкистсем хӑйсен машинисене тӑшманӑн хирӗҫ тӑмалли юлашки вырӑнӗсене, Шеляпин аркатса тӑкма ӗлкӗрейменскерсене, ҫӗмӗрсе тӑкма кайрӗҫ те, паттӑрӑн ӗҫне унӑн боевой юлташӗсем туса ҫитерчӗҫ. Нимӗҫсем тытӑнса тӑраймарӗҫ, чакма тытӑнчӗҫ. Танкистсем хыҫҫӑн пыракан пехота тӑшманран тытса илнӗ огневой рубежа ҫирӗплетсе пычӗ.

Каҫхине тин ирӗке кӑларнӑ ялти пӗр ҫурма ишӗлнӗ ҫуртра Якименкопа Лукьяненкона парти членӗн кандидатне илнӗ. Вилнӗ пӗр большевик вырӑнне иккӗ йышӑннӑ.

Юлашки ҫапӑҫусем вӑхӑтӗнче кӑна партин Горбунов юлташ секретарь пулса ӗҫлекен организацийӗнче 23 ҫын хутшӑннӑ. Парти ретне хӑрама пӗлмен паттӑр фронтовиксем кӗреҫҫӗ. Новиков юлташӑн чаҫӗнчи коммунист-танкистсем хӑйсен паллӑ ӗҫӗсемпе чапа тухрӗҫ. Паттӑрлӑхӑн, хастарлӑхӑн, вӑрҫӑ ӗҫӗнчи чеелӗхӗн тата ӑсталӑхӑн примерӗсем куллен хийӑла пулса тӑчӗҫ.

Питӗ вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ Д. пункта тытса илессишӗн пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче танкистсен отрячӗ, майор Капричев ертсе пынипе, виҫӗ хут вӑйлӑрах противника хирӗҫ ҫапӑҫса ҫӗнтерӳ тунӑ. Старший политрук Громацкий хӑйӗн танкӗпе противникӑн тылне ҫӗмӗрсе кӗрсе кайнӑ та унӑн боевой йӗркисене персе аркатнӑ, йывӑр артиллерин батарейине пӗтерсе тӑкнӑ, ҫапла вара икӗ кун хушшинчи ҫапӑҫӑва татса панӑ. Старший политрук Коробов виҫӗ хут аманнӑ пулнӑ, анчах та вӑл тӑшманӑн икӗ танкне пӗтерсе тӑкса, ыттисене хӑваласа яриччен те ҫапӑҫуран пӑрахса тухман. Большевиксен примерӗнчен партире тӑман фронтовиксем тӑшмана ҫӗнтерме вӗренеҫҫӗ.

**АКУЛЬШИН.**

(«Правда» хаҫатран).

Хӗвеланӑҫ фрончӗ.

## Ирӗке кӑларнӑ Керчь хулинче

КЕРЧЬ, январӗн 17-мӗш. (ТАСС). Хӗрлӗ Ҫарпа Хура тинӗс флочӗ Керчь хулине фашистла оккупантсенчен хӑтарнӑ кунранпа икӗ эрне иртрӗ. Керчь ӗҫҫыннийӗсем нимӗҫсем пӑсса хӑварнӑ предприятисене, коммунальнӑй хуҫалӑха, шкулсене, больницӑсене тата культурӑллӑ учрежденисене юсаса йӗркелес тӗлӗшпе пӗтӗм тимлӗхе хурса, ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ.

Нимӗҫ варварӗсем ҫӗмӗрнӗ Керчь портӗнче Хӗрлӗ Ҫар ҫитнӗ вӑхӑтра ишӗлтерсе тӑкнӑ ҫурт-йӗр куписем ҫеҫ курӑнса выртатчӗҫ. Портра пӗр ҫурт та, пӗр механизм таврашӗ те ҫӗмӗрӗлмесӗр юлман. Фронтовиксен коллективӗ, порт начальникӗ Маркевич юлташ ертсе пынипе, портри хуҫалӑха юсас пирки кунӗн-ҫӗрӗн тӑрӑшса ӗҫлет. Ку вӑхӑта ӗнтӗ пароходсем пырса тӑмалли вырӑна тасатса ҫитернӗ, транспортера юсаса лартнӑ, ытти механизмсене те йӗркелеҫҫӗ. Партин хула комитечӗпе хула Совечӗн исполкомӗ хӑйсем таврӑ партизан пулнӑ ҫынсене тата нимӗҫ оккупанчӗсем тӑнӑ вӑхӑтра вӑрттӑн ӗҫленӗ ҫынсене пӗтӗҫтерсе пысӑк актив явӑҫтарнӑ. Ҫак актив ӗнтӗ, икӗ эрне каярах нимӗҫ оккупанчӗсене ҫӗмӗрсе тӑнӑ пекех, хулана юсас тӗлӗшпе те вӑйне шеллемесӗр ӗҫлет.

Керчьре ку вӑхӑта ӗнтӗ хулана электричество парас ӗҫе юсаса ҫитернӗ, трамвайсене ҫӳрекен тунӑ, шкулсенче йӗркеллӗ занятисем пуҫланнӑ, магазинсем, парикмахерскисем, армансем, пекарньӑсем уҫӑлнӑ. Хула халӑхне ҫӑкӑр тата ытти продуктсем йӗркеллӗн парса тӑраҫҫӗ. Кинотеатрсем ӗҫлеҫҫӗ. Хула промышленноҫӗ чӗрӗлет. Войков ячӗпе тӑракан заводри механически цехӑн пӗр пайне ӗҫе янӑ, ытти цехсене йӗркене кӗртеҫҫӗ. Ку завода юсас ӗҫе нумаях пулмасть партизанра тӑнӑ инженерсем, Кущенко тата Иванов юлташсем, ертсе пыраҫҫӗ. Керчьри табак фабрики те ӗҫлеме тытӑннӑ. Ҫавӑн пекех атӑ-пушмак ҫӗлекен фабрика тата атӑ-пушмак тӑвакан 12 мастерской та ӗҫлеме пуҫланӑ.

Пулӑҫӑсем хӑйсен пулӑ тытмалли хатӗрӗсене тата кимӗсене юсаса хатӗрлеҫҫӗ. Вӗсем ҫитес кунсенчех тинӗс ҫине пулӑ тытма тухаҫҫӗ.

Ҫак кунсенче ҫеҫ-ха Керчь ҫыннисем, нумай шиклӗ пухӑнса, гестапо асаплантарса вӗлернӗ хӑйсен хулари граждӑнӗсене пытарчӗҫ. Пытарнӑ граждӑнсен масарӗ ҫинче Керчь ӗҫҫыннийӗсем фашистла вӑрӑ-хурахсене хаяррӑн тавӑрма, вӗсене пӗр хӗрхенмесӗр пӗтерсе тӑкма тупа турӗҫ, ҫакӑнпа пӗрлех вӗсем тӑшман аркатса хӑварнӑ промышленноҫа хӑвӑртрах ура ҫине тӑратма тата мӗнпур вӑя фронта пулӑшас ӗҫе пама пулчӗҫ.

# ИРӖКЕ КӐЛАРНӐ КАЛУГӐРА

## *Гитлерла вандалсем Циолковский музейне аркатса тӑкнӑ*

Калуга хули хӗрринче, Ока шывӗ патне анакан пӗр лӑпкӑ урамра, икӗ хутлӑ пӗчӗк ҫурт ларать. Вӑл ҫурта тул енчен чуспа ҫапнӑ, ҫӳлте — ҫутӑ пӳлӗм, алӑкӗсем чӗриклетсе уҫӑлса хупӑнаҫҫӗ. Ҫак ҫурт, тулашӗнчен пӑхсан, ытти ҫуртсенчен нимӗнпе те уйрӑм мар. Анчах та вӑл ҫурта малта пыракан мӗнпур этемлӗх лайӑх пӗлсе хисеплесе тӑрать: кунта мӗн ваталса виличчenех аслӑ ученӑй Циолковский пурӑннӑ, хӑйӗн пысӑк ӗҫӗсене тунӑ.

Гитлерла бандитсем октябрӗн 12-мӗшӗнче Калугӑна тытса илнӗ хыҫҫӑн, нимӗҫ ҫарӗн верховнӑй командованийӗ тӳррӗн хушнипе, Циолковскийӗн музей-ҫуртне аркатса, ишӗлтерсе пӗтерме тытӑннӑ. Ҫав кунах каҫхине пӗр ушкӑн нимӗҫ салтакӗсем урама кӗпӗрленсе тухнӑ. Хулара пурӑнакан ҫынсем ҫапла ӗҫ пулса иртнине сӑнаса тӑнӑ: бандитсем ҫавӑнтах музей алӑкӗсене ҫӗмӗрсе кӗнӗ те музей пурлӑхне тискеррӗн аркатма тытӑннӑ. Музей директорӗ Рыжовкин юлташ ҫак тискер ӗҫсене хирӗҫ протестлеме тӑнӑ: «Ӑнланӑр, ку ҫурт — пӗтӗм тӗнчипе паллӑ ученӑйӑн Циолковскин музейӗ. Мемориальнӑй япаласемпе экспонатсене тӗкӗнме юрамасть. Сире хватерсем кирлӗ пулсан, пушах ларакан юнашар ҫуртсене вырнаҫӑр», — тенӗ вӑл. Нимӗҫ офицерӗсенчен пӗри ӑна хирӗҫ намӑссӑррӑн ҫапла ответленӗ: «Пире ҫак ҫурт кирлӗ; эпир вӑл ҫуртран чул вырӑнне чул хӑвармастпӑр»,— тенӗ. Унтан директора тула кӑларса ывӑтнӑ.

Нимӗҫсем музей пӳлӗмӗсем тӑрӑх урса кайнӑ тискер кайӑксем пек тустарса ҫӳренӗ, винтовкисемпе мӗн лекнӗ ӑна пӑлхатса аркатнӑ. Чӳрече кантӑкӗсем чӑнкӑртатса ҫӗмӗрӗлнӗ, тӗрлӗ приборсем кӗмсӗртетсе ӳкнӗ, ӳсӗр нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсем ученӑйӑн моделӗсене ҫапа-ҫапа ҫӗмӗрнӗ, тӗрлӗрен намӑс сӑмахсем кӑшкӑрса ҫуйӑхашнӑ.

Пӗр пӳлӗмре нимӗҫсем Константин Эдуардовичӑн чаплӑ бюсчӗ ларнине курнӑ. Гитлерла бандитсем ҫав бюстӑн пуҫне ҫапса шӑтарнӑ та унта тимӗр пакур чиксе лартнӑ. Пӗтӗм экспонатсене шӑлса тӑкнӑ хыҫҫӑн вӑрӑ-хурахсем пӗр ещӗкрен Циолковскин микроскопне кӑларса илнӗ, хаклӑ чертежсемпе фотографисене, пӗр комплект вӗрҫӗнӗ велосипед покрышкисемпе камсерисене ҫаклатса тухса кайнӑ.

Халӗ музей тӑрӑх ҫӳретӗн те чӗрере ҫилӗ вӗреме тытӑнать. Музейӑн чи пысӑк пӳлӗмне нимӗҫсем казарма туса хунӑ. Кунта этемсем пурӑннине ӗненме те йывӑр, ҫынсем мар, сыснасем пурӑннӑ пуль тесе шутламалла. Пур ҫӗрте те утӑ ҫийӗнчӗкӗсем, пушӑ эрех кӗленчисем сапаланса выртаҫҫӗ.

Аэродинамикӑпа дирижабльсен отделӗ пулнӑ пӳлӗме гитлеровецсем ашкакай усрамалли склад туса хунӑ. Пӗр кӗтесре пӗрчӗкӗн-пӗрчӗкӗн аркатса тӑкнӑ дирижабль моделӗ йӑваланса выртать. Вӑл моделе тӑвассишӗн Циолковский темиҫе ҫул ӗҫленӗ. Тепӗр кӗтесре — тимӗр, йывӑҫ тата матери татӑкӗсем: аслӑ ученӑйӑн чапа тухнӑ аэродинамически трубинчен ҫакӑ кӑна тӑрса юлнӑ. Ура айӗнче кантӑк тӗпренчӗкӗ чӑкӑртатать.

Иккӗмӗш хута улӑхатпӑр. Акӑ Циолковскин ӗҫ кабинечӗ. Кунта вӑл ӗҫленӗ, шухӑшланӑ, ракетоплана, дирижабль схемисене тунӑ. Нимӗҫсем ҫак кабинета продуктсем усрамалли склад туса хунӑ. Циолковскин ӗҫ сӗтелне пӗтӗмпех вакласа чӗрпӗклентерсе пӗтернӗ: гитлеровецсем ку сӗтел ҫинче аш тураса пурӑннӑ пулнӑ. Ҫакӑнтах нимӗҫсем револьверсенчен персе айхашнӑ. Мишень вырӑнне ҫак бандитсем Циолковскин портречӗсемпе унӑн чертежӗсем ҫине тӗллесе персе ашкӑннӑ. Кайран ҫав пурлӑха пӗтӗмпех кӑмакана хутса ҫунтарса янӑ. Ҫӳлти ҫутӑ пӳлӗмре нимӗҫ вандалӗсем чӑхсем хупса усранӑ. Ку пӳлӗмӗн урайӗ пӗтӗмпех чӑх тислӗкӗпе вараланса пӗтнӗ. Фонд материалӗсене усрамалли пӳлемре нимӗҫсем апат хатӗрлесе пурӑннӑ. Ку пӳлӗмрен аслӑ ученӑйӑн 200 яхӑн фотонегативӗсем тата ытти вак-тӗвек япалисем питӗ нумай ҫухалнӑ.

Фашистла вӑрӑ-хурахсем Циолковский ячӗпе сыхӑнса тӑракан япаласене, уйрӑмӑнах мемориальнӑй пурлӑха, пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкма тӑрӑшнӑ. Вӗсем аслӑ ученӑй сывӑрса пурӑннӑ йывӑҫ кровате, Константин Эдуардовичӑн кӗнекесем усрамалли юратнӑ шкафне тата 4 пукана ҫунтарса янӑ. Ҫакнашкалах вӗсем 13 витринӑна, салонра ларакан 7 тенкеле, сарай стенисене, пӑлтӑрӑн пӗр пайне т. ыт. япаласене те нумай ҫунтарса пӗтернӗ.

Музейпа юнашар ҫуртра пурӑнакан 70 ҫулти карчӑк Иванова юлташ, музей япалисене ҫунтарса ярасран сыхласа хӑварас шутпа нимӗҫсене кӑмакасем хутма хӑйӗн юлашки вуттине илсе килсе панӑ пулнӑ. Ӑна хирӗҫ шалтан нимӗҫ офицерӗ тухнӑ. Карчӑк кунта мӗн тума килнине ыйтса пӗлнӗ хыҫҫӑн вӑл ӑна юр ӑшне ҫӗклесе ҫапнӑ та питӗ хытӑ хӗнесе тӑкнӑ.

Нимӗҫсем Циолковский музей-ҫуртне пӗтӗмӗшпех ҫунтарса ярасшӑн пулнӑ. Анчах та вӗсене ҫак ирсӗр ӗҫе тума пирӗн Хӗрлӗ Ҫар килсе чӑрмантарчӗ. Пирӗн мухтавлӑ боецсем, тӗттӗм ҫӗрпе усӑ курса, Ока шывӗ урлӑ каҫрӗҫ те нимӗҫсем кӗтмен ҫӗртенех Калугӑн кӑнтӑр енчи урамӗсене кӗрсе кайрӗҫ. Нимӗҫсем Циолковский музей ҫуртне ҫунтарса яма ӗлкӗреймесӗрех хуларан тухса тарчӗҫ.

Вырӑс халӑхӗ гитлерла вӑрӑ-хурахсене Константин Эдуардович Циолковскин музей-ҫуртне аркатса тӑкнӑшӑн нихӑҫан та каҫарас ҫук.

(«Правда», январӗн 18-мӗш.)

## Гитлерпа генералсем хушшинчи хирĕçӳ

ЛОНДОН, январĕн 17-мĕш. (ТАСС). «Таймс» хаçатăн Германи чиккинчи корреспонденчĕ çапла çырса пĕлтерет: нимĕçсен Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчи ĕçĕсем ăнăçманнине пула Гитлер çак ĕçсемшĕн айăпламалли çынна Германи генералĕсем хушшинче шырать. Темиçе кун каярах Браухичпа фон-Клейста фронтран Берлина чĕнсе илнĕччĕ, унтанпа вĕсем çинчен пĕр хыпар та илтĕнмест. Гитлер Хĕвелтухăçĕнче çĕнтерӳсем туса пынă 12 генералран ку вăхăтра 6 шне командованирен кăларса янă ĕнтĕ.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 17-мĕш (ТАСС). Америка хаçачĕсемпе радио Германири хирĕçӳсем çинчен тата унта паллă генералсене арестлени çинчен тухнă хыпарсене вăйлăн сараççĕ. «Балтимор сен» хаçат нимĕçсен çурçĕрти тата центрти фрончĕсенчи командованийĕсенче пулнă улшăнусем çинчен çапла çырать: çакăн пек улшăнусем вĕсем гитлеровецсем вăрçă ĕçĕсем ăнăçсăр пынă пирки кăмăлсăрланнипе çеç пулма пултараççĕ. Германи командованийĕнче чылай улшăнусем тунă ĕнтĕ, малалла Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчи ĕçĕсем йывăрланса пынă пирки, ун пек улшăнусене татах та т... ...ĕ пулмалла.

Нимĕçсене «çĕнтерме çук» текен юмаха выраççен тӳрем çĕршывĕнче тата Африка пушхирĕсенче сирсе янă пехех, Германи генералĕсем те, паллах, хăйсен вăйĕсене тата хакĕсене çухатма пуçлаççĕ, тет «Балтимор сен» хаçат.

## Германире фронтра ӳкернĕ кинокартинăсене кăтартма пăрахнă

СТОКГОЛЬМ, январĕн 19-мĕш. (ТАСС). Скандинави телеграф агентстви çапла пĕлтерет: юлашки вăхăтсенче Германири кинотеатрсенче Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче ӳкерсе илнĕ кинорепортажсене кăтартма пăрахнă. Ĕлĕкрех ку репортажсем Германири кинохроникăра тĕп вырăн йышăнса тăнă. Ютçĕршыв çыннисем тата нимĕçсем ыйтнине хирĕç пропаганда министерствин киносекцин руководителĕ Гиппль çапла ответ панă: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче тăракан шартлама сивĕсем кино ӳкерекен аппаратсене ĕçлеме кансĕрлеççĕ, тенĕ.

## Лăпкă океан çинчи вăрçă

### АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 19-мĕш (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: Филиппинри Батаан çурутравĕ çинче çапăçакан противник хăйĕн активлăхне чакарнă. Малтан активлăн пулса пынă операцисем халĕ лăпланаççĕ. Противникăн темиçе хутчен тунă атакисене сире-сире янă. Американецсем хăйсен малтанхи позицийĕсене йышăнса илес тесе тунă чылай операцисенче хăшпĕр çитĕнӳсем туме пултарнă: японецсене 4 самолет персе антарнă.

### АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 19-мĕш. (ТАСС). Англин Сингапуртри командованийĕ кăларнă коммюникере Гамас районĕнче патрульсен тытăçăвĕсем çинчен пĕлтернĕ. Англин бомбардировщикĕсем Гамасри сортировочнăй станци çине тапăннă, унта чупуçул çинчи составсене пысăк сиен кӳнĕ. Пушарсем нумай пулнă. Англин истребителĕсем сывлăшри çапăçура противникăн пĕр самолет персе антарнă тата противникăн транспорт колонисем пухăнса тăнă вырăнсем çине пулеметсенчен пенĕ. Автомашинăсене нумай сиен кӳнĕ.

Авиаци тепĕр соединенийĕ Японин баржисем çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ. Япони баржисем Муар юханшывĕ тăрăх çар материалĕсем турттарса пынă пулнă.

Сингапур çине вĕçсе пынă Япони самолечĕсене хирĕç Англин истребителĕсем тухса, японецсен икĕ самолетне пĕтерсе тăкнă тата 7 самолетне сиен кӳнĕ. Англичансен пĕр истребителĕ пĕтнĕ, летчикĕ вилмен.

Тинĕс бази районĕ çине японецсем бомбăсем пăрахнă, çавна пула нефтехранилищĕсенче пушарсем тухнă. Чылай пушарсене сӳнтернĕ, ытти çунакан вырăнсене сӳнтересси те ăнăçлăн пулса пынă.

Фронтăн Хĕвеланăç енче, Муар юханшывĕн районĕнче, японецсем вăйлăнах кусса пыраймаççĕ. Çавăнта японецсенне 8 танк пĕтерсе тăкнă.

## Японипе Китай хушшинчи вăрçă

Хубэй провинцин Çурçĕр пайĕнче Китай çарĕсем Суйсяньрен хĕвелтухăçнерехри Дзе-Хо патне пырса çитнĕ. Хунань провинцин çурçĕр пайĕнче Китай çарĕсем японецсен малти позицийĕсене атакăланă. Сынь Ян патĕнче японецсем Килинтуру енне..., Синдзяньрен 20 километр çурçĕререх, каялла чакнă.

## Йĕлтĕрçĕсен кросне хатĕрленетпĕр

ЭЛЕК. Вутланри туллимар вăтам шкулти учительсемпе вĕренекенсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулса иртекен кроса хутшăнма хĕрӳллĕн хатĕрленеççĕ. Шкулти 30 ача хăйсемех йĕлтĕрсем тунă.

Кроса хатĕрленсе ирттерме виçĕ çынран комисси организациленĕ. Комисси членĕсем кроса шкул ачисене анлăн явăçтарассишĕн ĕçлеиле пĕрлех, Татмăш ялсоветне кĕрекен колхозсенчи çамрăксем хушшинче те массăллă ăнлантару ĕçне туса пыраççĕ. Ку тĕлĕшпе комсомолăн шкул çумĕнчи пуçламĕш организацийĕн секретарĕ пулса ĕçлекен учительница М. Л. Илларионова тата шкулта физкультура вĕрентекен учитель М. И. Иванов юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Паянхи куна, кроса хатĕрленес майпа, шкул ачисемпе 4 хутчен тренировкăллă занятисем туса ирттернĕ. Вутлан колхозĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем (пурĕ 11 çын) икĕ хутчен вунă километрлă поход тунă.

Шкулта вĕренекен ачасенчен чылайăшĕсем йĕлтĕрпе лайăх çӳреме пултараççĕ. Вĕренӳ ударникĕсем Виктор Дубиковпа Анатолий Васильев (иккĕмĕш те çиччĕмĕш класран) йĕлтĕрпе туясăрах çӳлĕ сăртсем çинчен ярăнса анма та, хăпарма та хăнăхса çитнĕ. Çавăн пекех вĕренӳ отличникĕ Женя Васильева (виççĕмĕш класран), Филимон Михайловпа Павел Шихранов (6-мĕш класран) йĕлтĕрпе аван çӳреççĕ. Шкула та вĕсем йĕлтĕрпех çӳреççĕ.

М. ЯСТРАН.

* * *

КАЛИНИНО. Ассакассинчи туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулса иртекен йĕлтĕрлĕ кроса хатĕрленме тытăнчĕç. Нумаях пулмасть 5-мĕш «А» класра вĕренекен пионерсем 5 километрлă поход туса ирттерчĕç. Унта 35 пионер пулчĕ. В. Алферов, Г. Парамонов, В. Мясников, А. Денисов тата ытти чылай пионерсем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç. 7-мĕш класра вĕренекен Л. Пантелеймонов, И. Орлов, Л. Власов, Н. Капитонов, Н. Ермолаев, В. Мальцев, Д. Иванов тата ытти пионерсем те кашни кунах уроксем хыççăн тренировкăсем туса ирттереççĕ. Вĕсем кросра мала тухассишĕн тăрăшаççĕ.

Йĕлтĕрлĕ кроса хатĕрленес ĕçре физрук В. Емельянов юлташ тăрăшса ĕçлет. Кроса хутшăнса мала тухассишĕн шкулта ăмăрту саралсах пырать.

Б. ШОРНИКОВ.

* * *

СĔНТЕР. Мăн-Сĕнтĕр вăтам шкулĕнче вĕренекен комсомолецсем кроса хĕрӳллĕн хатĕрленеççĕ. Нумаях пулмасть кроса хутшăнма тивĕçлĕ комсомолецсем медицина енĕпе тĕрĕслӳре пулчĕç. Пурте вĕсем сывă. Халĕ тренировкăллă занятисем туса ирттереççĕ. Çак кунсенче 10 километрлă поход пулчĕ.

Ф. ЯНДУШКИН.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Районри учрежденисемпе предприятисенчи, шкулсенчи комсомолпа профсоюз организацийĕсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулакан йĕлтĕрлĕ кроса хатĕрленме тытăнчĕç. Районĕпе кроса 2 пин çынран кая мар хутшăнма хатĕрленеççĕ. Вĕсенчен 900 çын йĕлтĕрпе çӳреме вĕренес тĕлĕшпе тренировкăсенче пулаççĕ. Кроса ирттерме 10 куст уйăрнă. Вĕсем валли 28 çынран судьясен коллегине çирĕплетнĕ. Районра пурĕ 452 йĕлтĕр туса хатĕрленĕ.

НКВД отделенийĕнче ĕçлекенсем пурте кроса хутшăнаççĕ. Вĕсем кашни канмалли кун тренировкăсем туса ирттереççĕ. Госбанкпа перекет кассинчен кроса 16 çын хутшăнать.

Аслă Чурачăкри вăтам шкулта вĕренекенсем 5, 10, 30 километрлă походсем туса ирттернĕ. Вĕсенче 40 ача ытла пулнă.

Анчах йĕлтĕрçĕсен кросне хатĕрленесси комсомолăн колхозсенчи организацийĕсенче начар пынине палăртмалла. Комсомолăн «Кзыл Сабанча», Пушкин ячĕпе тăракан колхозсенчи организацийĕсенче пĕр мăшăр йĕлтĕр те тупса хатĕрлемен. Çӳреме вĕренес тĕлĕшпе те тренировкăсем пулмаççĕ.

В. ВИКТОРОВ.

## „Актив“ колхоз членĕсем фронта куллен пулăшаççĕ

КУКЕÇ. («Чăваш Коммуни» корр.). Трешкассинчи «Актив» колхоз членĕсем фронта пулăшас ĕçе кунран-кун вăйлатса пыраççĕ. Ку таранччен колхозникĕсем оборона фондне 2 центнер тĕштырă, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 50 тир, 15 килограмм çăм тата ыт. те панă. Кашни уйăхрах колхозникĕсем 1—2-шер ĕçкунĕ çине тухакан тупăшa оборона фондне парса тăраççĕ.

Январĕн 10-мĕшĕнче колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕ пулса иртнĕ. Çав пухура колхозникĕсем Çĕрпӳ районĕнчи «Цивильстрой» колхоз членĕсен чĕнĕвне сӳтсе явнă. Колхозникĕсем, «Цивильстрой» колхоз пуçарнă ĕçе ăшшăн ырласа, Хĕрлĕ Çар валли колхозăн общественнăй фондĕнчен вунă сурăх, пĕр ĕне, 2 сысна, 20 чăх çитĕнтерсе самăртма тата оборона фондне çĕнĕрен 300 çăмарта, 4 килограмм çу пама йышăннă. Колхозник С. Васильев хăйĕн хуçалăхĕнчен Хĕрлĕ Çар валли пĕр сурăх, пĕр чăх, çирĕм çăмарта, пĕр килограмм çу, З. Петров колхозник пĕр чăх тата 20 çăмарта пама пулнă. Ытти колхозникĕсем те хăйсен хуçалăхĕсенчен 38 чăх, 590 çăмарта, 4 килограмма яхăн çу пухса параççĕ.

Колхоз хăйĕн общественнăй фондĕнчен государствăна кооператив урлă 27 центнер тĕштырă сутать.

## Кайăк-кĕшĕксем ӳстерсе параççĕ

Елчĕк вăтам шкулĕнче вĕренекенсем республикăри пионерсемпе шкул ачисене тăван Хĕрлĕ Çар валли кайăк-кĕшĕк ӳстерсе пама чĕнсе каланине нумай шкулсенче сӳтсе яваççĕ, ачасем хăйсем çине обязательствăсем илеççĕ.

Ишлей районĕнчи Тĕрăн вăтам шкулĕнче вĕренекенсем 23 чăх, 4 сысна çури ӳстерме йышăннă. 7-мĕш класри Ваня Михайлов пĕр сысна çури, Гриша Сорокин пĕр путек, Ваня Петровпа Маруся Романова пĕрер чăх çитĕнтерме пулнă. Ярабайкассинчи туллимар вăтам шкулти М. Васильева пĕр кăвакалпа пĕр чăх, Гриша Петров пĕр сысна çури, К. Майкова пĕр сурăх ӳстереççĕ.

Кувакинăри вăтам шкулта 15 чăх, 2 путек, пĕр сысна çури ӳстерсе пама пулнă. Кладбищенскри вăтам шкулта 18 чăх, 9 путек, 2 сысна çури ӳстереççĕ. Мишуковăра 10 чăх самăртаççĕ.

Шахасан вăтам шкулĕнче вĕренекенсем 13 путек, 3 качака путекки, 58 чăх, 29 сысна çури пăхаççĕ. Аркадий Орлов вĕренекен пĕр сысна çури, Коля Иванов—пĕр чăх ӳстерет.

## Комсомолецсем колхозсене çуракине хатĕрленме пулăшаççĕ

СĔНТЕРВĂРРИ. «Осоавиахим» колхоз (председателĕ Ф. Кузьмин) авăн çапса пĕтерчĕ. Ялхуçалăх артелĕн уставĕпе пăхнă пур фондсене те тырă уйăрса хунă. Вăрлăхсене чи лайăх кĕлетсене вырнаçтарнă. Халь кăçалхи тупăшпа ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе пама хатĕрленеççĕ. Колхозникĕсене ĕçшĕн хупса тӳлеме кашни бригада мĕн чухлĕ тырă туса илнине шутлаççĕ.

Халь колхоз çуракине хатĕрленет. Ку тĕлĕшпе правленине колхозри комсомолецсем пулăшаççĕ. Çак кунсенче вĕсем колхоз çуракине мĕнле хатĕрленнине пăхса тухрĕç. Вăрлăх сителĕклĕ, сортланă. Анчах ялхуçалăх машинисем пит йĕркеллех мар-ха. Хăшпĕр машинăсем уйрах ларни те пулнă. Çавăнпа та çав кунах комсомол организацийĕн секретарĕ Иванов юлташ комсомолецсене пуçтарчĕ, плугсене уйран илсе килсе сарайне лартрĕç, халь вĕсене юсаççĕ. Унсăр пуçне хире вырăнти удобренисем кăларма тытăнчĕç. Пурĕ 160 лав тислĕк тăкнă. Çуракине хатĕрленес ĕçе комсомолецсем пионерсене те явăçтараççĕ. Вĕсем кашни кунах кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухма çӳреççĕ. Кашни комсомолец хăй çине пĕр центнер кĕл, çур центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухма, юр тытмалли 5 щитран кая мар тума конкретнăй обязательствăсем илнĕ, ĕçе те тытăннă. Пурĕ 6 центнер кĕл, 1,5 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пуханнă та ĕнтĕ.

А. РАЗИН.

* * *

ИШЛЕЙ. Районри комсомолецсемпе çамрăксем колхозсене çуракине хатĕрленме пулăшаççĕ. Ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене юсас тĕлĕшпе пыракан уйăхлăхра 198 комсомолец хутшăнса ĕçлет.

«Труд» колхозра ялхуçалăх машинисем тĕрлĕ çĕрте сапаланса выртнă, 5 плуг уйрах ларнă. Комсомолецсем халь вĕсене пуçтарнă та юсаççĕ.

Жданов ячĕпе тăракан колхозра çамрăксем уйăхлăх пуçланнăранпа 27 плуг юсаса лартнă.

Тракторсене юсас тĕлĕшпе комсомолăн МТС-ри организацийĕ аван ĕçлет. Халĕ 48 трактора юсанă, уйăхлăх вĕçлениччен тепĕр 10 тракторне те юсаса пĕтерме шутлаççĕ.

Çуракине хатĕрленнĕ май районри комсомолецсемпе çамрăксем 842 центнер тырă сортланă, 214 центнер кĕл, 216 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

Комсомолăн Жданов ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш организацийĕн секретарĕ Игнатьев юлташ ертсе пынипе шкул ачисем 198 центнер кĕл пухнă.

Мамăшри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем «Коммунист» колхоза 15 центнер кĕл, 2 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса панă.

Хăймалакассинчи туллимар вăтам шкулăн вĕренекенсем 41 щит çыхнă.

З. МИТРОФАНОВА.

## Колхозниксен политикăллă активлăхĕ

ВĂРНАР. Сендимиркинăри «Гигант» колхоз—районра малта пыракан колхозсенчен пĕри. Вăл хăйĕн ĕçне вăрçă вăхăтĕнчи йĕркепе туса пырать. Йăлтах фронт валли! Йăлтах çĕнтерӳ тунă çĕре! Çакăн пек лозунгпа ĕçлеççĕ колхоз членĕсем.

Колхоз 1941 çулти обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçларĕ. Кăçалхи çулшăн 2605 литр сĕт, 26,9 центнер аш-какай панă. Государствăна кооператив урлă 40 центнер тĕштырă сутнă. Юратнă тăван çĕршыв оборонин хăватлă фондне тăвас ĕçе колхоз активлăн хутшăнчĕ. Вăл оборона фондне 50 центнер тĕштырă, 13 килограмм çăм, 325 килограмм аш-какай тата 1045 литр сĕт пачĕ.

Халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ фронта активлăн та ĕçлĕн пулăшма чĕнсе калани çине ответлесе, колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар валли аш-какай резервĕ хатĕрлеççĕ. Çак ĕçе активлăн хутшăнма вĕсем районри мĕн пур колхозниксемпе колхозницăсене чĕнчĕç, хăйсем енчен вĕсем колхоз ферминче планран ирттерсе ӳстернĕ 15 сыснана, 2 вăкăра самăртса хатĕрлеме; хăйсен хуçалăхĕсенчен 5 сысна, 10 сурăх самăртса пама йышăнчĕç. Кунсăр пуçне вĕсем оборона фончĕ валли 100 центнер тĕштырă уйăрнă, 30 центнер çĕрулми тата чылай пахча çимĕç, 50 килограмм çу, 8 центнер табак пухса пама обязательство илнĕ. Илнĕ обязательствăсене колхозниксем тăрăшса пурнăçлаççĕ. Çак кунсенче колхоз 7 сысна, 37 чăх самăртса Хĕрлĕ Çара пачĕ, вĕсенчен пĕтĕмпе 4,5 центнер аш-какай тухать. Колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çара пама харпăрхăй килĕсенче выльăхсем самăртаççĕ.

Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лайăх пурнăçласа пырать. Колхозăн ĕне, сысна, сурăх тата кайăк-кĕшĕк фермисем пур. Вĕсем колхоза иртнĕ çул 46 пин тенкĕлĕх тупăш панă. Фермăра ĕçлекенсем 1941 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем турĕç. Сысна ферминче ĕçлекен А. Кожанова 7 сысна аминчен планпа 87 сысна çури çитĕнтерес вырăнне 122 çăвăр çитĕнтернĕ, 680 ĕçкунĕ тунă. Ĕçне кура—тупăшĕ. Ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх Кожанова юлташа 7 çăвăр панă. Кожановăпа пĕрле сысна ферминчех тепĕр çамрăк хĕр А. Николаева ĕçлет. Вăл планран ирттерсе 30 çăвăр çитĕнтернĕ, 594 ĕçкунĕ тунă. Çĕнĕ закон тăрăх ăна 6 сысна çури панă. Сурăх ферминче ĕçлекен Г. Волков ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕркепе 2 тир, 2,5 килограмм çăм илнĕ. Вăл планран ирттерсе 10 путек çитĕнтернĕ, 420 ĕçкунĕ тунă.

Укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сыраса илес, «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухас ĕçсенче те колхозниксем хăйсен патриотизмне, политикăллă активлăхне кăтартрĕç. Вĕсем лотерея билечĕсене илме 810 тенкĕлĕх сыраса, укçине те сыраса кунах тӳлесе татрĕç. Красноармеецсен арăмĕсем Фекла Макарова, Анна Макарова, Ирина Макарова тата виçĕ красноармеецăн амăшĕ Иван Миговаров юлташсем лотерея билечĕсене кашниех 20-шер тенкĕлĕх сыраса, укçине те çавăнтах тӳлерĕç. «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума колхозăпе 1000 тенкĕ ытла пухнă.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе колхозра халĕ хĕрӳ ĕç пырать. Колхозниксем нумаях пулмасть 10 тонна сульфат аммони кӳрсе килчĕç. М. Красильниковпа П. Скворцов тимĕрçĕсем 10 плуг юсарĕç. Колхоз çĕнĕрен 2 плуг туянчĕ. Кунсăр пуçне 25 центнер кĕл пухнă, нумаях пулмасть 100 центнер сĕлĕ, 43 центнер урпа, 50 центнер тулă сортласа хунă.

В. МАКСИМОВ.

## Выльăх-чĕрлĕхрен ытларах тупăш илессишĕн

ÇĔРПӲ. «Новая жизнь» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1941 çулти плана пур йышши выльăхсем енĕпе те тултарчĕ. Майракаллă шултăра выльăхсен шутне план тăрăх 30 пуç вырăнне 40 пуçа, сыснасен шутне 105 пуç вырăнне 108 пуçа, сурăхсен шутне 40 пуç вырăнне 45 пуçа тата кайăк-кĕшĕксен шутне 130 пуç вырăнне 224 пуçа çитернĕ. Йышлă выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма ăшă витесем хатĕрленĕ. Кĕр пуçламăшĕнчех ферма работникĕсем пур йышши выльăхсен витисене те юсаса лартнă. Хĕл вăхăтĕнче çитерме 900 центнер выльăх апачĕ, 845 центнер çĕрулми, 500 центнер силос, утă, улăм тата концентратлă апатсем те çителĕклĕ таранах хатĕрлесе хунă.

Выльăх-чĕрлĕх продуктивноçĕ ӳссех пырать. 1941 çулта çулталӑкри план тăрăх ĕнесенчен 14300 литр сĕт суса илес вырăнне 11 уйăх хушшинчех 19247 литр сĕт суса илнĕ. Планпа кашни ĕнерен 1300 литр сĕт суса илес вырăнне 11 уйăх хушшинче 1750 литр суса илнĕ. Мартынова дояркa çулталăкри план тăрăх 7800 литр сĕт суса илес вырăнне 11 уйăх хушшинче 11220 литр, Романова доярка 6500 литр вырăнне 8027 литр сĕт суса илнĕ. Сĕт суса илес енĕпе плана ирттерсе тултарнăшăн Мартыновăпа Романова дояркăсем ĕçшĕн хушса тӳлемелли закон тăрăх 306—210-шар литр сĕт илчĕç.

Сысна ферминче ĕçлекен колхозниксем те пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. 1941 çулта 24 сысна аминчен 480 çăвăр пăхса ӳстерчĕç. Огорожев свинарь 8 сысна аминчен 161 çăвăр тата Тимохин свинарь 8 сысна аминчен 159 çăвăр пăхса ӳстерчĕç.

Колхоз сурăх ĕрчетес тĕлĕшпе те начар ĕçлемест, кашни 100 сурăх пуçне 125 путек пăхса ӳстерчĕ.

Фермăра ĕçлекен работниксем Сталин юлташ чĕнсе каланине ĕçпе пурнăçлаççĕ. Хĕрлĕ Çара нумайтарах аш-какай, сĕт-çу, çăмарта тата ытти продуктсем те ытларах туса парассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

В. ИГНАТЬЕВ.

## Юлса пыракан колхозсем

ÇĔРПӲ. («Чăваш Коммуни» корр.). Нумаях пулмасть районра ялсовет тата колхоз председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Вăл канашлура государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçлас ĕç районра çителĕксĕр пынине палăртса, кайра пыракан колхозсен руководителĕсене çак ĕçе çитес кĕске кунсенчех пурнăçлама хушса хăварчĕç. Государство умĕнчи обязательствăсене январĕн 10-мĕшĕ тĕлне пурне те пурнăçласа çитерме пулчĕç.

Унтанпа ĕнтĕ 6—7 кун ытла иртрĕ. Анчах ĕç вырăнтан хускалма курăнмасть-ха. «Богатырь», «Красный флот», «Социалистический путь», «Коминтерн», «Актай» колхозсем тата Чапаев ячĕпе тăракан колхоз государствăна обязательнăй йĕркепе тĕштырă тăратас плана 22—46 процент çеç тултарнă. Çавăн пекех Лĕпсер ялсоветĕнчи колхозсем те государствăна 136 центнер тырă, 20 центнер махорка, «Политотделец» колхоз 70 центнер тырă парса татман.

Канашлу пулса иртсенех, Райсовет исполкомĕпе Уполнаркомзаг колхозсене 1941 çулăн декабрь уйăхĕнче государствăна тырă пама график туса панă. Çав график тăрăх хăшпĕр колхозсем 5 кун хушшинче 5—6-шар центнер, урăхла каласан, кашни кун пĕрер центнер тĕштырă леçмелле пулнă. Паллах ĕнтĕ, çак графикa пăхăнса ĕçлес пулсан, хăшпĕр колхозсем государствăна обязательнăй йĕркепе халех тăратмалли тырра çĕнĕ тырă пуличчен те тултарас çук.

Заготзернон хулари лабораторийĕ йĕркеллĕ ĕçлемест. Лабораторире сивĕ пирки анализсене тĕрĕс тăваймаççĕ. Тырă леçме килнĕ колхозниксене лаборатори умĕнче нумай кĕттерсе тăратаççĕ.

Государствăна тырă тăратас обязательствăсене районри пур колхозсен те халех пурнăçлас пулать. Райсовет исполкомĕпе Уполнаркомзагра ĕçлекен работниксен çак ĕçе васкатма колхозсене пулăшмалла.

## Вăрман хатĕрлев планне срокчен тултарассишĕн

ЭЛЕК. («Чăваш Коммуни» корр). Паянхи куна районра 62 колхоз вăрман хатĕрлев ĕçне хутшăннă. Вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе Мăн Шĕвĕш, Актай, Вырăс Сорм, Хитекушкĕн, Хирпоси колхозĕсем ытти колхозсенчен малта пыраççĕ. Мăн Шĕвĕш колхозĕн планпа 120 кубометр йывăç касса хатĕрлемелле пулнă. пулсан, халĕ вăл 67 кубометр йывăç касса хатĕрленĕ те ĕнтĕ. Кунсăр пуçне колхоз лаша вăйĕпе 25 кубометр йывăç турттарнă.

Актайри «Комбайн» колхоз вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлеме ятарласа бригада организациленĕ. Вăрманта куллен 6 çын ĕçлет тата 2 çын лашапа турттараççĕ. Декабрĕн 7-мĕш тĕлнех ку колхоз 56 кубометр йывăç касса хатĕрленĕ, лашапа 40 кубометр турттарнă.

Çавăн пекех коммунист В. Куликов юлташ ертсе пыракан Хитекушкĕнри «Светлый путь» колхоз та 45 кубометр йывăç касса хатĕрленĕ. Вырăс Сормĕнчи «Доброволец» колхоз (председателĕ Бочков юлташ) 50 кубометр касса хатĕрленĕ, 34 кубометр турттарнă.

Лайăх ĕçлекен колхозсемпе пĕрлех, вăрман хатĕрлевне пачах хутшăнман колхозсем те пур-ха. Элекенушкĕн ялсоветĕнчи (председателĕ И. Кириллов юлташ) 3 колхозран пĕри те вăрман хатĕрлес ĕçе хутшăнман-ха. Панкли ялсоветĕнчи (ялсовет председателĕ коммунист Кондратьев юлташ) колхозсем те, Анатри Панкли колхозĕсĕр пуçне, вăрман хатĕрлевне хутшăнса ĕçлеме тытăнман. Асамат, Татмăш, Вутлан, Йăлкăл тата ытти хăшпĕр колхозсенче те ку тĕлĕшпе ĕç япăх тăрать.

Вăрман хатĕрлевĕн планне срокчен тултарассишĕн, çак ĕçре малта пыракан колхозсемпе танлашассишĕн пĕтĕм вăя мобилизацилесе ĕçлемелле.

## Хĕрарăмсен ĕçри хастарлăхĕ

Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа колхозри хĕрарăмсем хушшинче нумай ĕç паттăрĕсем ӳссе çитĕнчĕç.

Сăмахран, Шăмăршă районĕнчи «Труженик» колхозах илер. Ку колхозра вăрçăччен хăшпĕр хĕрарăмсем ĕçсынсем тумалли ĕçсене тытăнсах кайман-чĕç. Халь вĕсен хăюлăхĕ темиçе хут ӳсрĕ. Колхозри хĕрарăмсем тума ĕç хальхи вăхăтра çукпа пĕрех. Хăйсен упăшкисемпе пиччĕш-шăллĕсем фронта кайнă хыççăн ялхуçалăхĕн пур ĕçĕсенче те хĕрарăмсем хăйсен пĕтĕм пултарулăхне, пĕтĕм вăйне хурса ĕçлеççĕ.

Колхозница Тарасова упăшкине фронта ăсатнă хыççăн пĕр кун та ĕçе тухмасăр юлман. Вăрçă пуçланнăранпа вăл 290 ĕçкунĕ тунă. Нимĕнле ĕçрен те хăраса тăмасть. Итем çинче те ĕçлет, кăрмантан вутă та турттарать. Колхоз производствинчи пур ĕçсене те хутшăнать.

— Фашистла ирсĕрсене хăвăртрах пĕтерсе тăкассишĕн хамăн пĕтĕм вăя хурса тăрăшатăп,—тет вăл.

Красноармеец арăмĕ Е. Романова та кашни кунах ĕçе тухать. Вăл тăватă уйăх хушшинче 168 ĕçкунĕ тунă.

Колхоз производствинче ĕçе нишер норма тултарса ĕçлекенсем те сахал мар. Е. Тарасовăпа Хомуткина колхозницăсем колхозра стахановла ĕçлеççĕ. Вĕсем кашни кунах ĕç нормине 200—250 процент таран тултараççĕ. Е. Тарасова 1942 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне 464 ĕçкунĕ, М. Хомуткина—397 ĕçкунĕ тунă.

Вĕсем хăйсен тӳрĕ кăмăллă ĕçĕсемпе нумай колхозницăсене пример кăтартса параççĕ.

Ф. КРАСНОВ.

## Промартелĕн çитĕнĕвĕсем

ШАХАСАН. Шуркассинчи Советсен VIII-мĕш Съезчĕн ячĕпе тăракан çĕвĕ çĕлекен промартель 1941 çулти çулталăк планне ытлашшипех тултарнă. Артель членĕсем иртнĕ çулта тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармаççĕ, вĕсем кăçал çĕршыва тата нумайрах та лайăх пахалăхлă продукци парассишĕн ăмăртăва вăйлатсах пыраççĕ. Хальхи вăхăтра промартель мухтавлă Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем çĕлесе хатĕрлет.

— Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерӳсем пирĕн чĕрене хавхалантараççĕ, пире татах та лайăхрах ĕçлеме чĕнеççĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсене ăшă тумтирсем çителĕклĕ кирлине шута илсе, эпир хамăрăн ĕçе ытларах вăйлатассишĕн хĕрешетпĕр,—тет промартель председателĕ И. Николаев юлташ.

Промартельре стахановецсен йышĕ ӳссех пырать. Иртнĕ вăхăтсенче нормăна тултарса ĕçленĕ рабочисем, халĕ 3—4 çын вырăнне пĕччен ĕçлесе, кулленхи ĕç нормине 250—300 процент таран тултараççĕ.

Артельри паллă стахановецсен шутĕнче: Егорова, В. Антонов, Николаев юлташсем тăраççĕ. Вĕсем пурте сменăри нормăна ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Иртнĕ вăхăтсенче О. Егорова юлташ кулленхи нормăна 180 процент таран тултарса ĕçленĕ пулсан, халь вăл кашни кунах 200—250-шар процент тултарать. Çавăн пекех, В. Антонов, Николаев юлташсем те кулленех ĕç нормине 250—300 процент таран тултарса пыраççĕ.

Промартель членĕсем Хĕрлĕ Çара, тăван çĕршыва пулăшас тĕлĕшпе аван ĕçлеççĕ. Вĕсем «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума кашниех икшер кунхи ĕçкунĕне панă тата Промкооперации ячĕпе тăракан танксен соединенийĕ валли 1640 тенкĕ укçа хывнă.

В. ЯКОВЛЕВ.

## КĔСКЕН

● Çĕмĕрле хулинче пурăнакан илем хуçи хĕрарăмĕ В. Ижеева интереслĕ сех картинăсем çырать. Вăл юлашки вăхăтра çырнă «Çĕнĕ 1942 çул» ятлă картина, Чăвашсен халăх творчествин çуртне янăскер, пысăк пахалăхлă картина пулса тăрать.

● Шупашкар хулинчи арманта ĕçлекен Моляровпа Иванов юлташсем çăнăх авăртас плана кунсерен ирттерсе тултараççĕ. Вĕсем авăртса кăларнă çăнăх пысăк пахалăхлă.

● Рысь ятлă тискер кайăк, Сĕпĕрĕн аслă вăрманĕсенче пурăнаканскер, пирĕн Чăваш республикинчи вăрмансенче сайра курăнать. Нумаях пулмасть Сĕнтĕрвăрри районĕнчи вăрманта сунарçăсем пĕр рыса вĕлернĕ.

● МТС тата çĕрĕç органĕсенче ĕçлекен работниксен профессиллĕ союзне çĕнĕрен 480 çын члена кĕнĕ.

● Республикăн пур районĕсенче те сельпо тата колхоз председателĕсен канашлăвĕсем пулса иртрĕç. Çав канашлусем пирĕн колхозсен государствăна сутма тĕштырă запасĕ нумай пурррине кăтартса пачĕç.

● Чăвашсен пулă тресчĕ колхозсен пулă ĕрчетмелли хуçалăхне вăйлатма 10 пин тенкĕ укçа уйăрнă. Улатăр районĕнчи «Путь Ильича», Кувакино районĕнчи «XIII лет Октября» колхозсен пулă хуçалăхĕ кăçал вăйлăн ӳсмелле.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 6—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 6—85, издательство конторин — 6—23.

НТ 22. Типография №1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.